Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 5 КĔÇНЕРНИКУН 101 (4914) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ Пĕр №-ĕ 10 пус.

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Большевикла пичет кунĕ — пĕтĕм халăх уйавĕ

Пайан совет пичечĕн кунĕ, социалисăм çĕршывĕнчи пĕтĕм ĕçсыннисен уйавĕ. Большевикла пичет — вăл пĕтĕм ĕçсыннисен пичечĕ. Ирĕклĕ çĕршыври ĕçсыннисем Ленин — Сталин партийĕ хĕрÿлĕн йуратнă пекех, большевикла пичете те хĕрÿлĕн йуратаççĕ. Мĕншĕн тесен, пирĕн пичет социалисăм ĕçĕшĕн, совет халăхĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕшĕн, халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешет, коммуниссен парти аллинчи чи çивĕч, чи вăйлă хĕçпăшал пулса тăрат. В. И. Ленин пирĕн хаçатсем çинчен çапла каланă: „Хаçат — коллективлă пропагандис тата коллективлă агитатăр çеç мар, çавăн пекех вăл коллективлă организатăр та".

Пирĕн ĕçсыннисене хаçат-журнал сывлăш пекех кирлĕ. ССР Союзĕн Сталинла Конституцин 125-мĕш статйинче: „Ĕçсыннисен интересĕсемпе килĕшÿлĕ тата социалисăм йĕркине çирĕплетес майпа ССР Союзĕн гражданĕсене саккун çакăн пек ирĕклĕхсем гарантилет: а) сăмах ирĕклĕхĕ, б) пичет ирĕклĕхĕ, в) пухусемпе митингсен ирĕклĕхĕ, г) урамри шествисемпе демонстрацисен ирĕклĕхĕ.

Гражданĕсен çав прависем, ĕçсыннисемпе вĕсен организацийĕсене çав правасене пурнăçа кĕртсе пыма типографисем, хут запасĕсем, общĕствăлă çуртсем, урамсем, çыхăну хатĕрĕсем тата ытти кирлĕ материаллă условисем панипе пурнăçа кĕрсе пыраççĕ" тесе çырнă.

Çака вăл Совет Союзĕнчи рабочисемпе хресченсем коммунисла парти йертсе пынипе çĕнтерсе илнĕ историлĕ ĕçсенчен пĕри пулат.

Октйабăрти Социалисăмлă Аслă революци хыççăн пичет пит те хăвăрттăн ÿссе пычĕ. Ăна айалта кăтартнă цифăрсем йар-уççăн кăтартса параççĕ, вĕсем совет çĕршывĕн пуйанлăхĕ, культурăлăхĕ ÿсни çинчен калаççĕ. 1913 çулта Росçийăра пурĕ те 859 хаçат тухнă, вĕсен тиражĕ 2 мĕлйун та 700 пин екземплăр çеç пулнă. 1936 çулта Совет Союзĕнче 9 пин ытла хаçат тухнă, вĕсен пĕтĕм тиражĕ 38 мĕлйун екземплăра йахăн пулнă. Çапла ĕнтĕ Совет Союзĕнчи хаçатсен шучĕпе вĕсен тиражĕ революцичченхипе танлаштарсан 11 хут ытларах ÿснĕ. 1937—38 çулсенче хаçатсемпе вĕсен тиражĕ тата нумай ÿсрĕ.

Ку çеç мар, ĕлĕк, патша саманинче вак халăхсен, „инородцăсен" хăйсен чĕлхипе хаçат-журналсем пачах та пулман. Вĕсене патша правителĕстви хаçат-журнал кăларма ирĕк паман, пусмăрта, тĕттĕмлĕхре пăчăхлантарнă. 1936 ç. 69 чĕлхепе хаçат-журнал, 111 чĕлхепе кĕнеке тухса тăнине хисепе илсен, епĕр мĕнле малала кайнине, Совет Союзĕнчи халăхсен тăванлăхĕ, туслăхĕ çирĕпленсе пынине пит те уççăн куратпăр.

Чăваш республикĕнче те хаçат-журнал, кĕнекесем кăларас ĕç пит те хăвăрт малала кайса пырат. Халĕ пирĕн республикăра 4 хаçат тухса тăрат, вĕсен тиражĕ 90 пин екземплăр. Районсенче 25 хаçат, вĕсен тиражĕ 52500 екземплăр, саватсемпе колхозсенче 7 хаçат пичетленсе тухат, вĕсен тиражĕ 3400 екземплăр. Кăçал Чăвашиздат 1910 пин екземплăр, 2,2 мĕлйун тенкелĕх кĕнеке кăларат. Çаксем çумне кашни хапракра, кашни саватра, колхозра, учреждениере, шкулра тухса тăракан темиçе пин стена хаçатсене хушсан, Сталинла Конституци ĕçсыннисене панă пичет ирĕклĕхĕ мĕн пек пысăккине, мĕн пек чапли кашни ĕçсыннин пите палла пулат.

Пирĕн хаçатсем — ĕçсыннисен хаçачĕ. Çакна пулнипе Совет Союзĕнчи 3 мĕлйунпа ĕçхалкорсен çарĕ çирĕплетет. Рабкорсемпе ялкорсем большевикла пичет ĕçĕнче пит те пысăк вырăнта тăраççĕ. Большевикла пичет ĕçсыннисемпе тачă çыхăну тытат. Вăл хăй тавра темиçе мĕлйун çынна пĕрлештерсе тăрса, вĕсенчен социалисăм строителĕствин хастарлă кĕрешекен çынсем вĕрентсе çитĕнтерет. Анчах та пирĕн хаçатсем массăпа çыхăну тытассине тата ытларах вăйлатмала. Промышленнăçри, ялхуçалăхĕнчи стахановецсене, ударниксене, совет интеллигенцине пичет ĕçне тата нумайрах, тата хайулăрах хутшантармала. Кашни хаçатăн çĕршер, пиншер рабкор, ялкор пулмала, хăйĕн активĕпе коллективĕ пулмала. Парти Тĕпкомĕпе Сталин йулташ массăпа тачăн çыхăну тытмала, массăран ĕçлеме вĕренмелле тесе кăтартса панине хаçатсен нихăçан та манмала мар.

Пирĕн хаçатсене ĕçсыннисем кашни кун вулаççĕ, кашни номĕртех хăйсене вĕренме пулăшакан статйасене, заметкăсене, информацилĕ шелтерÿсене пыраççĕ. Халĕхи вăхăтра ĕçсыннисем политикă тата культурă тĕлĕшĕнчен те нумай çĕкленчĕç. Çапла пулин те пирĕн хаçатсемпе журналсем вулакансем ыйтнине пурнăçа кĕртеймеççĕ-ха. Хаçатсенче культурă, политикăлă çивĕчлĕх çителĕксĕр, вулакансене ăнланмала мар чĕлхепе çырса кăларни кашни хаçатрах пысăк ситменлĕх пулса тăрат. Сăмахран, Шăмăршăри „Колхозник сасси" хаçат пек кашни номĕртех 10—15 йăнăшпа тухакан хаçатсем пирĕн сахал мар. Çак ĕнтĕ вăл вулакансене хисепленминнипе килет. Пичет кунне уйавласа ирттернĕ май, пирĕн хаçатсен культурăлăхне ÿстерес, содержанине лайăхлатас, политикăла çивĕчлĕхне вăйлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермеле. Çакна тума хаçатсем хăйсен ĕçĕсем çинчен партипе комсомол, советпа профсойуз активĕсен, рабочисемпе колхозниксен пухăвĕсенче отчотсем туса пани, хаçатсен ĕçне масса критиклени пысăкăн пулăшат. Хаçатсен рабочисемпе ĕçсыннисем кăтартса панă йăнăшсене тÿрлетесси, ситменлĕхсене пĕтересси пысăк задачă пулат.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ кăтартса панă ситменлĕхсемпе йăнăшсем хаçатсен ĕçĕсенче те сахал мар пулнă. Кашни хаçатăн Парти Тĕпкомĕн Пленумĕ решенине хăй пурнăçа мĕнле кĕртнипе пур йенчен те тĕрĕслесе тухмала. Хаçатсен хăйсен йăнăшĕсене чи малтан тÿрлетмеле. Анчах та халĕ ку тĕлĕшпе пирĕн хаçатсен нумайăшĕ хайулăх тупаймаççĕ. Вĕсем хăйсен йăнăшĕсем çинчен халăх умĕнче уççăн каласа пама пикĕленсе тăраççĕ. Шалăх, çаксемшĕн коммуниссемпе комсомолĕçсен, рабочисемпе колхозниксен пухăвĕсенче хаçатсене, унта ĕçлекен йулташсене хытă йатлĕç, йатламалă та.

Парти пурнăçне çутатма манни хаçатсен ĕçĕнчи пысăк çименлĕхсенчен пĕри пулнă. Кун пирки парти Тĕпкомĕ йатарлатса кăтартса панă пулин те, Улатăр, Çĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенчи хаçатсем парти пурнăçне ĕçсем çинчен халĕ те питĕ начар çутатаççĕ. Парти организацийĕсем те, уйрăм коммунисемпе комсомолĕçсем тата пĕтĕм ĕçсыннисем çакнашкал хаçатсем çине кăмăллăн пăхма, вĕсен ĕçĕсемпе килĕшме пултарайрас çук. Пичет кунĕ пирĕн хаçатсем парти пурнăçне çутатассине мĕнле организациленине, Парти Тĕпкомĕн йанварти пленумĕн решенийĕсене пурнăçа мĕнле кĕртнине тĕрĕслесе иртмеле.

Епĕр кăçалхи пичет кунне политикăла пысăк кампанисем вăхăтĕнче уявласа ирттеретпĕр. Халĕ партин йертсе пыракан органĕсене суйлас кампани пырат. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлав кампанийĕ пуçланчĕ. Çак политикăла кампание пирĕн хаçатсен, парторганизацисен, социалисăм ÿсĕмне кăтартмала, ситменлĕхсене критиклемелле, халăх тăшманĕсене кăклаçа пĕтерме, партин йертсе пыракан органĕсене Ленин-Сталин парти пулăшмала. Çĕнĕ йулташсене суйлама парторганизацисене пулăшмала.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче хаçатсен çĕнĕ рабкорĕсем, ялкорсем ÿсрĕç. Республикăри тата районсенчи хаçатсен çак активне çирĕплетмеле, вĕсене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлав кампанине активлăн хутшăнтармалла.

Массă большевикла пичетне тачă çыхăну тытат. Пичет ĕçне ĕçхалăхĕн анлă масси кашни кун çăнаса тăрат, пичет ĕçне коммунисăм строителĕствин пĕтĕм ĕçсен уйрăмли пайĕ тесе шутлат. Çавăнпа та пирĕн пичет ĕçĕнче, унăн ĕçхалкорсен çарĕ ретĕнче Ленин — Сталин парти ĕçне, халăх ĕçне парăнлă, çирĕп, шанчăклă, ĕçре тĕрĕсленĕ коммуниссем тата партире тăманнисем, тĕрĕс большевиксем çеç пулмала. Пирĕн хаçатсем, редакцисене ĕçлекен ĕçне масса тĕрĕслесе тăтăр. Пичет кунне хаçатра ĕçлекенсем, ĕçхалкорсем революцийĕшĕн большевикла сыхăлăха вăйлатнипе, хаçатсене ĕçсыннисем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетнипе, хаçатсен политикăла сивĕчлĕхне, культурăлăхне çÿле çĕклесе ирттерĕр!

ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

№ 110. 1938 çулхи майăн 1-мĕш. Мускав хули.

Йулташсем — красноармейĕцсем, командирсем тата политработниксем!

Сире хамăрăн Майăн пĕрремĕшĕнчи пĕтĕм халăх праçникĕ — пролетарилĕ пĕрçухăшлăх тата пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн револуцилĕ паттăр вăйĕсене пăхса тухмали кунĕ йачĕпе сывлăх сунса саламлатăп.

Çак кун Совет Сойузĕнчи халăхсем социалисăм строителствин мĕн пур облаçĕсенче тунă хăйсен çĕнĕ аслă çĕнтерĕвĕсене мухтавлăн пăхса тухаççĕ.

Ленин — Сталин партийĕ йертçе пыракан пирĕн çĕршыв, тĕнчере чи малта пыракан индустрилĕ тата чечекленекен çĕршывсенчен пĕрийĕ пулса тăнă пирĕн çĕршыв ÿсет, тĕрекленет тата чечекленет. Социалисăмлă савăтсенчи, хапрăксенчи тата колхозсенчи ирĕклĕ ĕçчен çынсен нумай мĕлйунлă çарĕ, институтсем, лабораторисем тата пиншер културă учрежденийĕсем ăнăçусене кашни кун нумайлатса пыраççĕ, пирĕн хăватлăхăн çĕнĕ тата аслăрах малашлăхĕсене тупса палăртаççĕ. Ĕçсынни массисен материаллă пурнăçĕ тата културă патне малала туртăнасси ÿссе пырат.

Ленин — Сталин партийĕ аслă Тăван çĕршыв интересĕсемшĕн, социалисăм интересĕсемшĕн халиччен пулман героисăм кăтартма тата паттăр та хăйулă ĕçсем тума пултаракан çĕнĕ çынсене пăхса ÿстерчĕ, вĕрентрĕ тата вĕсене ырми-канми çĕклентерсе пырат.

Совет Сойузĕ — тĕнчери халăхсем тăванла пĕрлешсе тăрассин тĕслĕхĕ. Ленинла-сталинла наци политики вăл — ÿлĕмрен пĕтĕм халăхсем çĕнтерÿлĕн туслашса пурăнассин çирĕп никĕсĕ. Çакна çирĕппĕн ĕнентерсе тăраканĕ вăл — Совет Сойузĕнчи пит нумай халăхсемпе ăрусем пĕрлĕхлĕ тĕллевсемпе тата задачисемпе пĕрлешсе тăни, ĕççыннисен пĕрлĕхлĕ государствинче тăванла вăйлă çемйе пулса тăни.

Ĕççыннисен мĕлйуншер массисене пур йенчен те ÿссе пыма, етеме татти-сыпписĕр лайăхланса пыма тата пурне те малала туртăнма Совет Сойузĕнче çеç чăн-чăн условисем туса панă.

Пирĕн çĕршыври социалисăм ăнăçăвĕсем пĕтĕм тĕнчери пролетарисемпе ĕççыннисен чĕрисенче тата шухăшĕсенче хăватлă чĕнÿ пек сисĕнсе тăраççĕ, вĕсен капиталисăмлă чуралăхран хăйсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешес хастарлăхне организацилеççĕ.

Пайан та, йаланхи пекех, вĕсен куçĕсем кунта, Сталинла Конституци çĕршывĕ çине, халăхăн чăн-чăн демократин тата чăн-чăн ирĕклĕ ĕçĕн çĕршывĕ çине пăхаççĕ; кунта нацилĕ уйрăмлăха, çынна çын експлоатацилессине, çуклăха тата ĕççĕрлĕхе йаланлăхах пĕтернĕ, кунта пĕтĕм ĕçлекен халăх чăн-чăн хуçа пулса тăрат.

Пĕтĕм çутçанталăкри ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕх тата туслăх кунĕнче, кивĕ, вилĕм шăрши çапнă капиталисăмлă тĕнчен тĕксĕм таврăкурăмĕнче ССР Сойузĕ мĕн пур пурлăхсăр етемлĕхшĕн уйрăмах çутă çăлтăр пек йалкăшса тăнă кун, — капиталисăмăн хура вăйĕсем хăйсен пролетариачĕн пуçĕсем çине çĕнĕ скорпионсем йатăнтарса антарĕç, хăйсем вăйсăр пулнине тата Советсен çĕршывне хирĕç урса кайсах тарăхнине ĕçыннисем çине йăвантарма хăтланса пăхĕç.

Тĕнчери йунлă вăрçăн тĕпсĕр шăтăкĕ патне етемлĕх ÿссе пыракан хăвăртлăхпа куçса пырат. Хĕвеланăçĕнче тата Хĕвелтухăçĕнче фашиссем организациленĕ вăрçă калама çук пысăккăн сарăлса кайрĕ тата „кучухнехи" формă пулса тăчĕ, çапла вара тĕнчери буржуази хăйĕн фашисла авангарчĕпе хăй хатĕрлекен тĕнче вăрçин ăнăçлă „репетицийĕшĕн" хавасланма çеç пултарат. Анчах та, вăрçă чĕртсе йаракансен çакна асра тытас пулат: тĕнче вăрçин пушарĕ ĕçчен халăхăн çурчĕсене çеç мар лайăх çунта ăт, вăл мĕлйуншар рабочисемпе хресченсене çеç мар лайăх пĕтерет, тата çав вăрçă вут-кăварех патшасемпе королĕсене вĕсен монархийĕсемпе пĕрле, помещиксемпе буржуазине вĕсен влаçĕпе тата капиталĕсемпе пĕрле пит пахан пĕтерсе хурат.

Капиталиссемпе фашисăм çине тăрсах организацилекен пĕтĕм тĕнчери çак çĕнĕ вăрçăра, хăй вăхăтĕнче Росçийă буржуазийĕ çунса кайнă пекех, пĕтĕм тĕнче буржуазийĕ çунса кайат.

Паттăр Испанири тата аслă Китайри халăх массисем, вăйсем пĕр тан мар кĕр шÿре, империалисăмлă пусмăрçăсене хирĕç хăйсен нацийĕ никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн, пурнăç правишĕн хăйулăн кĕрешеççĕ. Йун йухтарса, вĕсем пĕтĕм тĕнче умĕнче массăсен тĕлĕнмеле паттăрлăхне, мĕлйунсен пысăк хăйулăхне, аслăран та аслă чăтăмлăх тата тăшмана çĕнтермели витĕмлĕ ирĕк-кăмăл кăтартаç ĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Испанипе Китайăн паттăр борецĕсене вĕçĕмсĕр йуратса тăрат.

Совет халăхĕ, хăйĕн Правителствипе пĕрле, пĕтĕм тĕнчипе мирлĕ пурнăç интересĕсене сыхласа хăварчĕ тата малала та ним пăрăлăнмасăр сыхласа хăварĕ.

Çапах та епĕр çакна шута илмесĕр тăма пултараймастпăр: пирĕн вăхăтра тĕнче хĕçпăшаллă лагĕр пулса тăчĕ, тĕнчен икĕ пайĕнче вăрçă пушарĕ йавăнса йăлкăшат, пирĕн пит нумай тăшмансем, пирĕн тăвăмлă ĕçе шалтан аркатма пур майсемпе те хăтланса, пирĕнпе уçă çапăçăва тухма хатĕрленеççĕ. „Нимĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала" (Сталин).

Тĕнче вăрçине пуçарса йаракансем Совет Сойузĕн вăйĕпе хăватне тата унăн Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çирĕплĕхне лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем çавăн пекех тата çакна та пĕлеççĕ: пирĕн Тăван çĕршыва ирсĕртен те ирсĕр изменникĕсемпе предателĕсене, троцкисла-бухаринла тасамарлăха тата меншевикла-есерла çÿп-çапсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкни Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне пирĕн мĕн пур тăшмансемшĕн татах та хăйартарах турĕ. Анчах та халĕхи вăхăтра Йевропăпа Азире пулса пыракан ĕçсем пире уйрăмах сыхăлăхлăрах тата çивĕчрех пулма хушаççĕ. Вăйхала вунă хут ÿстерсе, кашни сехете хакласа, пирĕн Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çапăçу пултарулăхне малашне те лайăхлатса пырас тĕлĕшпе, ăна политикăпа техникă йенчен малашне те ÿстерсе пырас тĕлĕшпе çине тăрса тимлĕн ĕçлес пулат.

Йулташсем — красноармейĕцсем, командирсем, комиссарсем тата политработниксем! Аслă совет халăхĕ пирĕн çине хамăрăн аслă Тăван çĕршыва хÿтлеме ответлăран та ответлă задачă хучĕ. Çак ответлă та хисеплĕ задачăна йаланах тивĕçлĕ пулăр. Тăшман пирĕн совет чиккисем çине тапăнма хăйсан, ăна çĕнтерÿлĕн çĕмĕрсе тăкма кирек хăш минутра та хатĕр пулăр.

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă, çĕнтерÿлĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ!

Сывă пулччăр пирĕн Тăван çĕршывăн ĕççыннисем!

Сывă пултăр Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен большевикла Партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă Сталин!

ССРС Оборонă Халăх Комиссарĕ
Совет Сойузĕн Маршалĕ
К. ВОРОШИЛĂВ.

ССРС Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

№ 52. 1938 çулхи майăн 1-мĕш.

Йулташсем — Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Флочĕн краснофлотцисем, красноармейцисем, командирĕсем тата политработникĕсем!

Сире Майăн пĕрремĕшĕнчи пĕтĕм халăх праçникĕ йачĕпе, çĕнтерÿлĕ социалисăмăн тата пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ пĕрлĕхĕн праçникĕ йачĕпе сывлăх сунса саламлатăп.

Майăн пĕрремĕшĕ аслă Совет Сойузĕнчи ĕççыннисемшĕн çĕнтерÿсемпе çитĕнÿсене пăхса тухмали кун, совет халăхĕн вăйне коммунисăмăн малашнехи çĕнтерĕвĕсемшĕн кĕрешме мобилизацилемели кун пулса тăрат. Телейлĕ совет халăхĕ пайан пирĕн хуласемпе колхозсен урамĕсенче хăйĕн вăйне, хăватне тата çĕнтерÿ тумали çирĕп ирĕк-кăмăлне демонстрацилет. Хăйĕн кĕрешсе çĕнтерсе илнисене ĕççыннисен аслă хартийĕ çинче çирĕплетсе хурса, пирĕн халăх, Сталинла Конституци тăрăх, аслăран та аслă пĕрлĕхлĕ пулса тĕнчипе пĕрремĕш, халиччен курман социалисăмлă парламент суйларĕ. Çĕнтернĕ социалисăм çĕршывĕнчи аслă халăх хăйĕн пĕтĕçÿлĕхне тата коммуниссемпе партире тăманнисен никам аркатайми блокĕнче палăрнă мораллĕ-политикăлă пĕрлĕхне пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем умĕнче тепĕр хут кăтартса пачĕ.

Совет государствинчи халăхсем çĕнĕ суйлавсене хатĕрленеççĕ, сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйласа лартма чи лайăх çынсене, хамăр тăван çĕршывăн патриочĕсене, Ленин — Сталин ĕçне чĕререн йуратса туса пыракан çынсене палăртаççĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисенчен телейлĕ пурнăçа туртса илсе пирĕн тăван çĕршыва пайăн-пайăн сутса пĕтерме хăтланнă троцкисла-бухаринла тата урăхла шпионсен, диверсантсен, фашисăма тара кĕрешнисен бандине çĕмĕрсе тăкса, совет халăхĕ Ленин — Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçрĕ, вăл пайанхи кун коммунисăма çĕнтерÿлĕн тăвас ĕмĕтпе тăрăшса нихăçанхи пек те мар пĕрлĕхлĕ те пĕтĕçÿлĕ.

Майăн 1-мĕш кунĕнче пирĕн çĕршывăн — пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывĕн — нумай мĕлйунлă халăхĕ паттăр Испани халăхне тата Испани республикине интервентсем — Германипе Италин фашисăмĕн çарĕсем тапăнса кĕнинчен хÿтлекенсене пурне те пулăшупа тăванла пĕр шухăшлăх аллине тепĕр хут тăсса тыттарат. Çак кун пирĕн тăванла йуратупа пĕр шухăшлăх сасăна Йапони захватчикĕсем тапăннине паттăрăн сирсе пыракан Китай ĕççыннисем илтеççĕ.

Епĕр пĕтĕм çĕршывсенчи рабочисемпе хресченсене фашисла агрессăрсене хирĕç ĕççыннисен тата малала туртăнакан мĕн пур етемлĕхĕн пĕрлĕх фронтне тума чĕнетпĕр, çав фашисла агрессăрсем тĕнчере çĕнĕрен йунлă вăрçă хатĕрлеççĕ, Советла Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ çине — пусмăрта пурăнакансен ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрсе çитнĕ çĕршыв çине тапăнма хатĕрленеççĕ.

Майăн 1-мĕш кунĕнче Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевикла) Партийĕ çапăçулă чĕнÿ парат:

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр! Марксăн — Енгелсăн — Ленинăн — Сталинăн интернационаллă йалавĕ айне тăрăр!

Советсен çĕршывне тискер кайăкла курайман фашиссем пирĕн сыхăлăха тата пирĕн чикĕсен çирĕплĕхне пĕр хутчен мар хыпашласа пăхма хăтланчĕç, анчах кашни хутĕнчех вĕсем арканса каймала отпор туйанчĕç. Хăватлă, никам çĕнеймен Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Флочĕ, капиталисăмлă йăри-тавралăх çинчен аслă Сталин каланă аслă сăмахсене асра тытса, вăрçăпа тапăнса килес хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тăнă, хальте çавăн пекех хатĕрех тăраççĕ тата ленинла парти йертсе пынипе хăйсен çапăçу пултарулăхне тĕреклетсе тата лайăхлатса пыраççĕ.

Совет халăхĕн ирĕкĕпе Рабочисемпе Хресченсен Правителĕстви пире, йулташсем — краснофлотĕцсем, командирсем тата политработниксем, хамăрăн аслă çĕршыв тивĕçлĕ тинĕсри тата океанри хăватлă флота тума хушрĕ. Çак хисеплĕ те йăвăр задачăна большевиксем пек пурнăçа кĕртме пулса Майăн 1-мĕш кунĕнче хамăр тăван çĕршыв умĕнче, ĕççыннисем умĕнче тупа тăвăпăр. Тинĕсри тата океанри хăватлă Хĕрлĕ Флот кĕске срукрах пулса çитет. Пирĕн туссем çакна пĕлсе тăччăр тата хавасланччăр. Пирĕн тăшмансем çакна пĕлсе тăччăр, асра тытчăр тата шута илчĕр. Совет çĕрĕ тата совет шывĕсем таса, вĕсене никам та тĕкĕнме пултараймаст.

Йулташсем — Тинĕс-Çар Флочĕн çамрăк краснофлотцисем!

Пайан есĕр аслă совет халăхĕ умĕнче, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем умĕнче Совет влаçĕшĕн тĕрĕс тăма пулса, социалисăмлă тăван çĕршывшăн тĕрĕс тăма пулса хĕрлĕ приçагă параттăр. Чăплă сăмах йышăннă йатпа сире сывлăх сунса саламлатăп тата есĕр хамăрăн тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсем пуласса, вăрçă ĕçне тата çар дисциплинине тĕреклетессе, хăвăрăн гражданла тивĕçлĕхе тÿрĕ те ырă кăмăлпа пурнăçа кĕртессе çирĕппĕн шанса тăратăп.

Сывă пултăр та тĕреклентсе пытăр хăватлă тăван çĕршыв!

Сывă пултăр аслă совет халăхĕ!

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийĕ — ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен малти отрйачĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр Коммунисла Интернационал — пĕтĕм тĕнчери револуци штабĕ!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Рабочисемпе Хресченсен Тинĕсри Хĕрлĕ Флочĕ!

Сывă пултăр пирĕн йуратнă, аслă çулпуçĕ — аслă Сталин!

ССРС Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ
1-мĕш рангри Арми Комиссарĕ
П. СМИРНОВ.

Тикси Бухтинчен, 28. IV. 38 ç.

Кремĕлъ — Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Йежов, Микойан йулташсене

РАПАРТ

Куçса çÿрекен пăрçĕмĕрсем çинчи „Садко", „Седов", „Малыгин" çинчи çынсене илсе тухма Есĕр пана заданине Алексейĕвăн Н-172, Головинăн Н-170, Орловăн Н-171 самолочĕсемпе пурнăçа кĕртрĕ. Тиксине 184 çын илсе пынă, пăрçĕмĕрсем çине 33 çын хăварнă. Вĕсене валăçи 2 çул пурăнмалăх апат-çимĕç, тăхăнмалисем тата гăрйуч çитĕнлĕх парса хăварнă.

Есĕр хушнă заданине пурнăçа кĕртнĕшĕн мухтанатпăр.

Карапсен командирĕсем:
АЛЕКСЕЙĔВ, ГОЛОВИН, ОРЛОВ,
штурмăнсем: ЖУКĂВ, ПЕТРОВ, БОГЕР,
аслă бортмеханиксем: СУГРОБĂВ, ЧЕЧИН, ФРУТЕЦКИЙ,
парторг ЙЕРЕМИН.

Округри суйлав комиççисене — чи шанчăклă çынсене

ШĂХАСАН. (Телефон тăрăх). Обшчĕствăлă организацисемпе ĕççыннисен обшчĕствисем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали округри суйлав комиççисен членĕсем пулма кандидатсем тăратрĕç. Кандидатсем çинчен пысăк хаваслăхпа, тимлĕхпе сÿтсе йаваççĕ. Суйлав комиççисене кашни организаци хăйсен чи лайăх та шанчăклă, партипе правителствă политикине парăнса ĕçхалăх интересĕсемшĕн тăрăшса ĕçлекен çынсене суйласшăн.

Йефремăв Кондратий йаланах колхоз ĕçне малала йарасшăн тăрăшнă, çавна пула иртнĕ çулта ăна колхоз председателне суйланă. Çав вăхăтранпа Йефремăв йулташ колхоз хуçалăхне нумай çирĕплетрĕ. Кăçал колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе организацилĕн тухрĕ. Йефремăв йулташ обшчĕствăлă ĕçре те активлă хутшăнса ĕçлет. ССР Сойузĕн Верховнăй Совечне суйлана вăхăтра доверенăй пулса ĕçленĕ. Массă хушшинче авторитетлă. Кăçал ăна ПСК(б)П членĕн кандидатне илнĕ. „Заря" колхозра апрелĕн 27-мĕшĕнче пулса иртнĕ колхозниксен аслă пухăвĕнче ăна Шуркасси суйлав округĕнчи суйлав комиççи членĕ пулма кандидата уйăрчĕç.

— Епĕр ăна колхзри ĕçшĕн хаклатпăр. Вăл Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен шанчăклă çын, ăна хаљ парти кандидатне илнĕ, вăл округри суйлав комиççи членĕ пулма тивĕçлĕ çын — терĕç колхозниксем.

„Свобода" колхозри колхозниксен аслă пухăвĕ те Иамаш суйлав округĕнчи суйлав комиççи членĕ пулма кандидата хăйсен колхоз председателне Виктăр Титов йулташа уйăрчĕç. Вăл комсомолĕц. Колхоз ĕçне аван йертсе пырат. Обшчĕствăлă ĕçре тăрăшса ĕçлет. ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче агитатăр пулса ĕçленĕ.

„Победа" колхозри колхозниксем те Авăс Пÿрт суйлав округĕнчи суйлав комиççи членĕ пулма 8-мĕш бригадăри бригадир Иван Захарăв йулташа кандидата уйăрнă. Захарăв йулташ партире тăман, нумай çул хушши обшчĕствăлă ĕçре активлăн хутшăнса ĕçлекен колхозник.

Кандидатсем уйăрнă чух пур пухусенче те коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ, пĕтĕм халăхăн политикăлă тата мораљлĕ пĕрлĕхĕ çирĕппи палăрат.

С. Соколов.

Майӑн пӗрремӗшне Мускавра уйӑвлани

Майӑн пӗрремӗшӗнчи парад

Хӗрлӗ площӗдре чаплӑн та лайӑх капӑрлатнӑ. Ҫуртсен фронтонӗсем ҫинче — Ленинпа Сталинӑн пысӑк портречӗсем. Ҫав тери пысӑк хӗрлӗ хӑмач йалавсенчен пӗринче Майӑн пӗрремӗшӗнчи лозунг сӑмахӗсем уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ: „Сывӑ пултӑр Майӑн 1-мӗшӗ — пӗтӗм тӗнчери пролетариатӑн революцилӗ паттӑр вӑйӗсен смотӑрӗ!". Вырӑс, испан, нимӗҫ, француз, акӑлчан тата китай чӗлхисемпе: „Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!" — тенӗ лозунга ҫырнӑ.

Кремӗл стени тӑрӑх тунӑ гранит трибунӑсем ҫине парад пуҫланиччен чылай малтан ҫынсем пырса тулнӑ. Кунта — столица предприятийӗсенчи стахановецсемпе ударниксем, ССРС Верховнӑй Совет депутачӗсем, Совет Союзӗн Геройӗсем, писательсем, ӑслӑлӑхпа искусства деятелӗсем. Мускав ҫыннисем йут ҫӗршывсенчен килнӗ рабочи делегацисене ала ҫупса тата саламласа кӗтсе илеҫҫӗ. Паттӑр Испани халӑхӗн делегацине уйрӑмах хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

9 сехет те 30 минут. Парад командуйушчийӗ Совет Союзӗн Маршалӗ С. М. Буденнӑй йулташ ҫарсене пӑхса ҫаврӑнать, вӗсене сывлӑх сунса тухать.

Площӗдь шӑпланать. Шӑп 10 сехетре Мавзолей трибуни ҫине Сталин, Молӑтав, Каганович, Калинин, Андрейӗв, Чубарь, Микойан, Йежов, Димитров, Шкирйатӑв, Шверник, Угарӑв, Булганин йулташсем хӑпараҫҫӗ.

Пӗтӗм ӗҫҫыннисен аслӑ ҫулпуҫне тата тусне Сталин йулташа чысласа, унӑн соратникӗсене чысласа хавасланса „урра" кӑшкӑрни площӗдре нумайччен чарӑнмасӑр тӑрать.

Кремӗлти Спасски хапхаран оборона Халӑх Комиссарӗ Совет Союзӗн Маршалӗ К. Й. Ворошилӑв тухать.

Парад командуйушчинчен рапорт илнӗ хыҫҫӑн, К. Й. Ворошилӑв йулташ Майӑн пӗрремӗшӗнчи праҫник йачӗпе бойецсене, командирсене тата политработниксене сывлӑх сунса саламласа, ҫарсене пӑхса ҫаврӑнать. Халӑх Комиссарӗ саламланине ответлесе красноармейецла хӑватлӑ „урра" кӗрлет.

10 сехет те 15 минут. Ҫарсене пӑхса ҫаврӑннӑ. К. Й. Ворошилӑв йулташ Мавзолей трибуни ҫине хӑпарать. ПСК(б)П Тӗпкомӗпе ССР Союз правительстви йачӗпе тата вӗсем хушнипе К. Й. Ворошилӑв йулташ ӗҫҫыннисене Пӗтӗм тӗнчери праҫник — Майӑн 1-мӗшӗ йачӗпе саламлать.

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн площӗдре тӑрса тухнӑ пиншер ҫамрӑк боецӗсем Рабочисемпе Хресченсен правительствишӗн тӗрӗс тӑма пулса, аслӑ совет тӑван ҫӗршывӗшӗн тӗрӗс тӑма пулса чаплӑ сӑмах параҫҫӗ.

Ворошилӑв йулташ хӑйӗн сӑмахне каласа пӗтерет. „Урра" кӑшкӑрни хӑватлӑн кӗрлесе кайать. „Интернационал" йанӑрать. Тупӑсенчен персе салют пани сывлӑша чӗтретет. Чаплӑ марш пуҫланать.

Марша Оборона Халӑх Комиссариачӗн Управленинчи начальниксен составӗн сводный полкӗ уҫать. Унтан ҫар академисенче вӗренекенсем пыраҫҫӗ.

Мускаври Пӗрремӗш стрелковӑй дивизи бойецӗсем, Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн ҫар чаҫӗсем тата мухтавлӑ пограничниксем — совет чиккисен сивчӗ часовойӗсем трибунӑсем ҫуммипе ҫирӗппӗн пусса утса иртсе кайнӑ чухне трибунӑсем ҫинче ырласа шавлаҫҫӗ, ала ҫупса саламлаҫҫӗ.

Хӗрлӗйалавлӑ Балтика морйакӗсем, хӑватлӑ Тинӗс-Ҫар флочӗн малта пыракан отрйачӗн представителӗсем тачӑ йӗркесемпе пыраҫҫӗ.

Трибунӑсем ҫинче тӑракансем Мускаври рабочисен хӗҫпӑшалла отрйачӗсем иртнине хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ. Летчиксем, парашютистсем пыраҫҫӗ...

Хӗрлӗ йулапутӑсем, Хӗрлӗ йалавлӑ Ленин орденлӗ, Сталин йачӗпе тӑракан уйрӑм кавалери дивизи бойецӗсем пит те йӗркелӗн пӗр тан тӑрса иртсе пыраҫҫӗ, вӗсем — пролетарилӗ революцин аслӑ стратегӗ Сталин йулташ тунӑ Пӗрремӗш Утлӑ Ҫарӑн мухтавлӑ традицийӗсене сыхласа усракансем. Тачанкӑсем кӗмсӗртетсе иртсе кайаҫҫӗ.

Артиллери пырать. Хӑвӑрт перекен тата инҫене перекен тупӑсем, гаубицӑсем, мортирсем, зенитла тата танксене хирӗҫ пемелли тупӑсем, йӑвӑр тупӑсен батарейӗсем Хӗрлӗ площӗд урлӑ чаплӑ маршпа куҫса пыраҫҫӗ.

Вӗҫӗнче, хӑватлӑ техника парадне танксем вӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенчен пӗрин башни ҫинче мӗлйунсем йуратакан йат ҫулӑмланса йалкӑшать: „СТАЛИН". Трибунӑсем ҫинчи халӑх ӑна тӑвӑллӑн ала ҫупса кӗтсе илет.

Кӑнтӑрла 12 сехет тӗлне парад пӗтет.

Хӗрлӗ площӗдри демонстраци

Пулеметсемпе тата тупӑсемпе хӗҫпӑшалланнӑ хайар та пысӑк танксем Хӗрлӗ площӗдрен тухса кайаҫҫӗ. Вӗсем хыҫҫӑнах демонстрантсен шавлӑ йухӑмӗ кӗрлесе кӗрет. Анчах ССРС ҫар хӑвачӗн смотӑрӗ сывлӑшра халь те пырать-ха. Штурмовиксен тата истребительсен ескадрилйисем хӑвӑрттӑн вӗҫсе иртеҫҫӗ. Демонстрантсем те тата Кремӗл стенисем патӗнчи трибунӑсем ҫинчи ҫынсем те совет ҫӗршывӗн мухтавлӑ соколӗсене хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

... Хӗрлӗ площӗд хӗрлӗ хӑмач йалавсемпе хумханать. Ҫӗршер пин демонстрантсем ӑна праҫникри хаваслӑ шавпа тултарса тӑраҫҫӗ. Пур ҫӗрте те хӑватлӑ „урра" кӑшкӑрни илтӗнет. Демонстрантсем Мавзолейӑн сулахай йенче тӑракан партипе правительство руководителӗсене саламлаҫҫӗ, социализм ҫӗнтерӗвӗсене чӗрӗ вӑй парса хавхалантаракан аслӑ Сталин йулташа йуратса ӑшӑ сӑмахсем калаҫҫӗ.

Демонстрантсем йут ҫӗршывсенчи рабочи клас суйласа йанӑ делегацисен тата уйрӑмах паттӑр Испани халӑхӗн представителӗсене калама ҫук ӑшшӑн ҫӗкленсе саламлаҫҫӗ. Сывлӑшала чечексен ҫыххисене ывӑтаҫҫӗ. Хайаррӑн тӑрӑхласа тунӑ пит нумай карикатурӑсем Йапонин Италин тата Германин фашисла агрессӑрсене тата вӗсене витсе усракансене намӑс йупи ҫумне пӑталаса лартаҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс Ҫар Флочӗ ҫинчен тунӑ, плакатсемпе лозунгсене демонстрантсем мӑнкӑмӑллӑн йатса пыраҫҫӗ.

Йапонипе Германи фашисӗмне тара кӗрешнӗ троцкисла-бухаринла бандӑн ирсӗр кайашӗсене ӗҫҫыннисем таса курайманлӑхпа тарӑхнине палӑртса параҫҫӗ. Совет халӑхӗ мухтавлӑ наркомвнуделӗцсене тата вӗсен хӑстарлӑ сталинла Халӑх Комиссарне Н. И. Йежова хӗрӳллӗн саламлать. „Пур тӗрлӗ двурушниксене пурне те тӑра шыв ҫине кӑларӑр! Пирӗн партийӗ — большевисӑмӑн никам илейми крепӑҫӗ туса хурар" — тесе чӗнеҫҫӗ лозунгсем.

Столицӑри пӗтӗм 23 районсен праҫникле капӑрланнӑ Майӑн пӗрремӗшӗнчи колоннисем вӗҫӗмсӗр иртеҫҫӗ. Хӗрлӗ площӗдре шавлӑ халӑх ушкӑнӗсем тулса лараҫҫӗ. Йурӑсем йанӑраҫҫӗ.

Ака площӗдне Дзержинский йачӗпе тӑракан Хӗрлӗ йалавлӑ Трехгорнӑй мануфактура рабочийӗсем пырса кӗреҫҫӗ. Хӗрлӗ бархатпа витнӗ тӑрӑхла ҫаврашка щитсем ҫинче Маркс, Енгельс, Ленин, Сталин, партипе правительство руководителӗсен портречӗсем ылттӑн тӗспе йалтӑртатаҫҫӗ. Ҫӗр чӑмӑрӗн икӗ метр ҫӳлӗш макет тӑррине — Папанинсен палатки, Советсен ҫӗршывӗн ҫӗнтерӳлӗ йалавӗ вӗлкӗшет.

Пролетарски районӑн шестви пуҫӗнче Сталин йачӗпе тӑракан автосавӑт коллективӗ. Автосавӑт рабочийӗсем ҫӑмӑл машинӑн пысӑк моделне ҫӗклесе пыраҫҫӗ. Вӗсем хыҫҫӑн Кирӑв йачӗпе тӑракан „Динамо" савӑт рабочийӗсен автоген савӑт рабочийӗсен колоннисем пыраҫҫӗ. Велосипед савӑтӗнчи рабочисем: „Савӑт ҫӗршыва 724.000 веломашина пана" — тесе рапӑртлаҫҫӗ.

Столицӑри кӗперсене тӑвакансем, метро строителӗсем, ӑслӑлӑх, культура, искусства работникӗсем, шкул ачисем, савӑтсен, хапрӑксен, ӑслӑлӑх институчӗсен, аслӑ вӗренӳ заведенисен, техникумсен, рабфаксен, киностудисен, театрсен коллективӗсем иртеҫҫӗ.

Пиншер транспарантсемпе плакатсем чаплӑ кун — 1938 ҫулхи ийунӗн 26-мӗшӗ, РСФСР Верховнӑй Советне суйлмали кун ҫывхарса килни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Лозунгсем коммуниссемпе партире тӑманнисен блокне ҫирӗплетме, суйлав кампанине организациллӗн ирттерме, союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене пирӗн тӑван ҫӗршывӑн чаплӑ патриочӗсене, рабочисемпе хресченсен телейӗшӗн, социализмшӑн, Ленин — Сталин ӗҫӗшӗн ним пӑркаланмасӑр ҫирӗп кӗрешекен ҫынсене суйлама чӗнеҫҫӗ.

Хӗрлӗ площӗдрен йут ҫӗршывсен делегацийӗ чи йулашкинчен тухса кайать. Делегаци колоннӑна тӑрать те паттӑр Испанин хӗрлӗ ҫапӑҫулӑ йалавӗне Мавзолей ҫуммипе иртет. Делегатсем аслӑ Сталина тата Совет правительствин членӗсене, аслӑ совет халӑхне хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

Майӑн пӗрремӗшӗнчи колоннӑсен шествийӗ — ҫак социализм ҫӗршывӗнчи халӑхӑн моральлӗ тата политикӑлӑ пӗрлӗхӗн чаплӑ демонстрацийӗ тӑватӑ сехет хушши тӑсӑлнӑ.

(ТАСС).

Вӑй тата пӗрлӗх демонстрацийӗ

Майӑн пӗрремӗшӗнче — пӗтӗм тӗнчери пролетариатӑн револђуцилӗ паттӑр вӑйӗсене пӑхса тухмали кун — пирӗн ҫӗршыври мӗлйуншар ӗҫҫыннисем хуласемпе йалсенчи урамсене тата площӗдсене тухнӑ. Вӗсем хӑйсем коммунизм йалавӗ тавра пӗтӗҫнине, Ленин — Сталин партийӗшӗн хӑйсем чунтан-чӗререн тӑнине, хӑйсен вӑрҫӑ пултарулӑхне пӗтӗм тӗнче умӗнче демонстрацилерӗҫ.

Ленинградра, Кийӗвра, Минскра, Тбилисире, Бакура, Фрунзере, Сталинабадра тата ҫӗршывӑн ытти хулисенче те ӗҫҫыннисен йышлӑ демонстрацийӗсем тата Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Тинӗс-Ҫар Флочӗн ҫар парачӗсем пулса иртнӗ. Ҫамрӑк бойецсем майӑн пӗрремӗшӗнче социализмлӑ тӑван ҫӗршывшӑн тӗрӗс тӑма пулса приҫагӑ йышӑннӑ.

Ленинградра Урицкий площӗдӗнчи трибунӑ ҫуммипе Ленинград Ҫар Округӗн чаҫӗсем тата Балти флочӗн морйакӗсем иртсе кайнӑ, вӑл трибунӑ ҫинче ПСК(б)П Тӗпкомӗн тата Ленинград Комитечӗн ҫекретарӗ Жданӑв йулташ, Ленинград Ҫар Округӗнчи ҫарсен командуйушчийӗ комкор Хозин йулташ, Хӗрлӗ йалавлӑ Балти флочӗн командуйушчийӗ иккӗмӗш рангри флагман Левченко йулташ т. ыт. тӑнӑ.

Ленин хулинчи ҫӗршер пин ӗҫҫыннисем трибунӑ ҫуммипе иртнӗ. Аслӑ коммунисла партине чысласа, халӑхсен йуратнӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа тата унӑн мухтавлӑ соратникӗсене чысласа хавасланса кӑшкӑракан саламлӑ сӑмахсем, Испанипе Китайӑн паттӑр халӑхӗсене чысласа саламласа кӑшкӑрнисем площӗдре татти-сыпписӗр илтӗннӗ.

Лозунгсемпе плакатсем ӗҫҫыннисене РСФСР Верховнӑй Совет суйлавӗсене ӑнӑҫлӑн хатӗрленме чӗннӗ.

Кийӗвра майӑн пӗрремӗшӗнчи демонстрацине 500 пин ӗҫҫыннине йахӑн тухнӑ. Ҫар чаҫӗсем, Днепр флотилин морйакӗсем трибунӑ ҫуммипе чаплӑ маршпа иртсе кайнӑ. Вӗсем хыҫӗнчен демонстрантсен ҫутӑ, праҫникле капӑрланнӑ колоннисем пынӑ. Майӑн пӗрремӗшӗнчи лозунгсене, плакатсене, партипе правительство руководителӗсен портречӗсене чӗрӗ чечексемпе симӗслетсе илемлетсе пӗтернӗ.

Совет Украинин — аслӑ Совет Союзӗн уйӑрӑлми пайӗн — столицинчи ӗҫҫыннисем хӑйсен майӑн пӗрремӗшӗнчи колоннисенче большевикла партине, хӑйсен тӑван, аслӑ Сталина хӗрӳллӗн йуратнине тата парӑннине демонстрациленӗ.

Ҫар чаҫӗсен парачӗ хыҫҫӑн, Минскри ӗҫҫыннисем 100 пин ҫын ытла Ленин площӗдӗнчи трибунӑ ҫуммипе иртнӗ. Демонстрацине ачасем уҫнӑ. Вӗсем площӗде аслӑ Сталин ҫинчен, тӑван ҫӗршыв ҫинчен тата унӑн геройӗсем ҫинчен йурласа пырса кӗнӗ.

Хула ӗҫҫыннисем ҫутӑ лозунгсем, йалавсем, транспарантсем тата панносем ҫӗклесе пынӑ. Вӗсем ҫинче совет халӑхне социализмӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсем патне чӗнекен, револђуцилӗ сыхлӑха ӳстерме чӗнекен, йуратнӑ тӑван ҫӗршывӑн оборона пултарулӑхне тӗреклетме чӗнекен сӑмахсем ҫунса тӑнӑ.

Мӗн пур колоннӑсенче илемлетсе тунӑ календар листисем вӗлкӗшнӗ, унта чаплӑ дата „1938 ҫулхи ийунӗн 26-мӗш БССР Верховнӑй Советне суйламали кун" тесе ҫырнӑ.

Мӗлйунсем йуратакан Сталин йатне Союзлӑ р е с п у б л и к ӑ с е н вунпӗр чӗлхипе ҫырнӑ. Халӑх ССРС Конституцине тӑвакана, хӑйӗн чи лайӑх тусне, ҫулпуҫне тата учительне мухтать.

Ашхабадра колоннӑсен шестви хыҫӗнче хӗвелпе піснӗ физкуљтурниксен икӗ пинлӗ отрйачӗ пынӑ, вӗсем массӑлӑ упражненисем тунӑ. Площӗдре чарӑнса тӑнӑ та, Туркмени спортсменӗсем хӑйсен стройӗпе тӑрса „Пирӗн йалав — Сталин" тесе ҫыру тунӑ.

Майӑн пӗрремӗшӗнче пур ҫӗрте те йышлӑ демонстрацисем пулса иртнӗ. Майӑн пӗрремӗшӗнчи демонстрацире Харькӑвра 500 пин ҫын, Бакура — 400 пине йахӑн, Тбилисире — 200 пин, Горькинче — 250 пин ҫын пулнӑ. Совет халӑхӗ хӑйӗн револђуцилӗ праҫникне хаваслӑн та чаплӑн уйӑвларӗ.

(ТАСС.)

Майӑн пӗрремӗшне йут ҫӗршывсенче уйӑвлани

Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем

Майӑн пӗрремӗш йачӗпе тӑвакан демонстраци кӑҫал Нйу-Йоркра апрелӗн 30-мӗшӗнче пулса иртнӗ. Демонстрацине 600 профсойузран тата ытти организацисенчен тӑракан пӗрлешӳлӗ комитет организациленӗ. Вӑл демонстрацине 300 пин ҫын хутшӑннӑ, демонстраци пуҫӗнче Америкӑ доброволецӗсем темиҫе ҫӗр ҫын пынӑ, вӗсем нумайах та пулмасть республикӑлӑ Испанирен таврӑннӑ. Демонстрантсем вунӑ пин йалавсемпе плакатсем йӑтса пынӑ, йалавсемпе плакатсем вӑрҫа тата фашисӑма хирӗҫ кӗрешме, Совет Союзне хӳтлеме, Китайа пулӑшу пама тата Испани правительствине хӗҫпӑшал сутма чармала тупине пӑрахӑҫа кӑларма чӗнеҫҫӗ.

Китай

Майӑн пӗрремӗшӗнче демонстрацисемпе митингсене Китайӑн пысӑк хулисенче пуринче те туса иртернӗ. Ханькоу, Учан, Ханьйан хулисенчи демонстрацисемпе митингсем пит хӑватлӑн иртнӗ. Ханькоура Май уйӑвне иртерме 20 пин рабочи ытла пухӑннӑ. Учан тата Ханьйан хулисенче 30 пин демонстранта йахӑн пуҫтарӑннӑ. Оратӑрсем лозунгӗсемпе сӑмахӗсем рабочисене пӗрлешме, Йапони захватчикӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫа вӗсене активлӑн хутшӑнма тата тыла ҫирӗплетме чӗннӗ. Хуласенчи халӑх демонстрантсене хӗрӳллӗн саламланӑ.

Франци

Франци пролетариачӗ Майӑн пӗрремӗш кунне рабочи клас пӗрлӗхӗн паллипе тата фашисла интервенцине хирӗҫ кӗрешекен Испанипе Китай халӑхӗсемпе пӗр шухӑшлӑ пулас паллӑпа иртернӗ. Парижре, савӑн цехех тата провинцисенче 460 пунктра йышлӑ митингсемпе демонстрацисем пулса иртнӗ. Париж районӗнчи ӗҫҫыннисен демонстрацинче 250 пин ҫын пулнӑ. Марсельре майӑн пӗрремӗшӗнчи демонстрацисенче 100 пин ҫын, Лионра — 50 пин, Руанре — 30 пин, Тулузӑра — 20 пин ҫын пулнӑ.

Англи

Майӑн пӗрремӗш йачӗпе тӗрлӗрен партисем организациленӗ митинга Лондӑнри ӗҫҫыннисем 150 пин ҫын ытла пуҫтарӑннӑ. Англи провинцисенче майӑн пӗрремӗшӗнче пулса иртнӗ кӑҫалхи демонстрацисем, ҫанталӑк аванах мар пулсан та, иртнӗ ҫулхисемпе танлаштарсан, чи хӑватлӑ демонстрацисем пулнӑ. Манчестерте демонстрацине 100 пин ҫынна йахӑн, Ноттингемре — 50 пин ҫын, Бирмингамре — 60 пин ҫын хутшӑннӑ.

Поља

Варшавӑра тата Пољшӑн ытти хулисенче Майӑн пӗрремӗшӗнче пулса иртнӗ демонстрацисем ҫӗршывра фашисӑма хирӗҫле шухӑша чылай вӑйлатнӑ. Малтанлӑха шутласа тухнӑ тӑрӑх, пӗтӗм Пољшӑра демонстрацисене 1.500.000 ҫын хутшӑннӑ. Варшавӑра йеврейсем пурӑнакан кварталра демонстрантсен колонни иртсе пынӑ вӑхӑтра фашиссем бомба пӑрахнӑ. Икӗ ҫын аманнӑ. Фашисла хулигансем демонстрацисем ҫине ӑнӑҫсӑр тапӑнма хӑтланса пӑхни хулан ытти пункчӗсенче те пулнӑ.

Майӑн пӗрремӗшӗнче Лодзире, Кракӑвра, Катовицыре массӑлӑ демонстрацисем пулса иртнӗ. Кељцре Майӑн пӗрремӗшӗнчи демонстраци вӑхӑтӗнче фашиссен ушкӑнӗ демонстрантсем ҫине пӑшалпа пеме пуҫланӑ. Пӗр рабочи вилнӗ, 10 аманнӑ. Рабочисемпе фашиссем тата полици хушшинчи йунлӑ тытӑҫусем савӑн цехех тата Љвов, Познань, Гродно, Кракӑв тата ытти хуласенче те пулса иртнӗ.

Румыни

Майӑн пӗрремӗшӗ умӗн Румынире пур ҫӗрте те фашисӑма хирӗҫле рабочисем, ремесленниксем, вӗренекенсем хушшинче массӑлӑ ухтарусем тунӑ тата арӗсленӗ. Пӗр Бессарабинче кӑна 100 ҫынна ытла арӗсленӗ. Ҫак майпа пичетре официаллӑ пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Унта ҫапла каланӑ: „апрелӗн 29-мӗшӗнче каҫхине массӑлӑ ухтарусем тунӑ тата арӗсленӗ. Следствишӗн усӑлӑ пултӑр тесе арӗсленисен йачӗсене кӑтартмаҫҫӗ". Фашисла пичет фашисӑма хирӗҫ кӗрешекенсене вӗсем „государствӑна переворот тума хатӗрленеҫҫӗ" тесе суйса айӑплать.

(ТАСС).

Майӑн пӗрремӗшӗнчи парадра пулнисене партипе правительство руководителӗсем Кремӗлре йышӑнни

Кремӗлри Пысӑк дворецра майӑн 2-мӗшӗнче, майӑн пӗрремӗшӗнчи парадра пулнисене Пӗтӗм Союзри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин тата ССРС правительствин руководителӗсем йышӑннӑ.

Кремӗлри дворецӑн пысӑк залӗсене 18 сехет тӗлне майӑн пӗрремӗшӗнчи парадра пулнисем: Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗн пур ҫарсен командирӗсем, политработникӗсем, тӗрлӗрен званилӗ инженерӗсемпе техникӗсем пухӑннӑ, вӗсем майӑн 1-мӗшӗнче аслӑ совет халӑхӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен никам ҫӗнейми хӑватне демонстрацилесе кӑтартнӑ.

18 сехет те 30 минутра Георгийевски зала **Сталин, Молӑтав, Ворошилӑв, Каганович, Калинин, Андрейӗв, Чубарь, Микойан, Йежов** йулташсем пырса кӗреҫҫӗ. Партипе правительство руководителӗсене тӑвӑллӑн, нумайччен чарӑнмасӑр оваци туса кӗтсе илеҫҫӗ. Йышӑнува пухӑннисем халӑхсен аслӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа тата унӑн ҫывӑх соратникӗсене красноармейецла тӑвӑллӑ „урра" кӑшкӑрса саламлаҫҫӗ.

ПСК(б)П Тӗпкомӗн тата Союз правительствин йачӗпе, майӑн пӗрремӗшӗнче парадра пулнисене — чаплӑ бойецсене, командирсемпе политработниксене — Оборона Халӑх Комиссарӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Ворошилӑв йулташ саламлать.

Ворошилӑв йулташ хӑйӗн чи малтанхи сӑмахӗнче Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗ ҫинчен калать. Йышӑнува пухӑннисене вӑл ҫапла калать:

— Ӗнер, Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ пирӗн Союз столицин Хӗрлӗ площӗдӗнче ҫеҫ мар тата ытти советлӑ республикӑсемпе облаҫсенчи куласен площӗдӗнче те — хӑйӗн вӑй-хӑватне, хӑйӗн организациллӗхне, хӑйӗн ҫапӑҫу пултарулӑхӗ, ҫӳлти вырӑнта тӑнине демонстрацилерӗ. Ытти чухнехи пекех, вӑл ӗнер те ҫапӑҫӑва йӑлтах хатӗр тӑнине кӑтартрӗ, вӑл кирек хӑш минутра та тӑшмана квалификацилӗ ҫӗмӗрсе тӑкма пултарнине кӑтартрӗ.

Ворошилӑв йулташӑн ҫак сӑмахӗсене вечӗрта пулнисем пурте тӑвӑллӑн ала ҫупнипе саламлаҫҫӗ.

Кун хыҫҫӑн Ворошилӑв йулташ пирӗн аслӑ, паха, тӗнчере пӗртен пӗр совет халӑхӗ ҫинчен калать, совет халӑхӗ хӑйӗн Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флотне хӗрӳллӗн йуратать, вӗсен хӑвачӗпе никам ҫӗнейменлӗхне вӑйлатас тесе совет халӑхӗ пурне те тӑвать.

Ворошилӑв йулташӑн Пӗтӗм Союзри Коммуниссен (бољевиксен) мухтавлӑ Партийӗ, пирӗн ҫӗнтерӳсене организацилекен тата чӗрӗ вӑй парса хӑватлантаракан, пур ӗҫҫыннисене те ҫывӑх, аслӑ Сталин ҫинчен каланӑ сӑмахӗсене пӗтӗм зал хӗрӳлӗ овацине кӗтсе илет. Кремӗлре йышӑнура пулнисем нумайччен чарӑнмасӑр ала ҫупнипе тата „Сталин йулташа „урра", „Сывӑ пултӑр пирӗн йуратнӑ Сталин", „Ӗҫҫыннисен аслӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа салам" тесе кӑшкӑрнипе пӗтӗм Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗн шухӑшӗсемпе кӑмӑлӗсене кӑтартса параҫҫӗ.

Ворошилӑв йулташ Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗнчен совет правительствин пуҫлӑхне — ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председательне Вйачеслав Михайлович Молӑтава тата Верховнӑй Совет Президиумӗн председательне Михаил Иванович Калинина салам калать. Йышӑнура пулнисем пурте хавасланса тӑвӑллӑн ала ҫупаҫҫӗ.

Кун хыҫҫӑн Молӑтав йулташ сӑмах каланӑ, вӑл пӗтӗм хӗҫпӑшалсен тата пур тӗслӗ ҫарсен бойецӗсене, командирӗсене, начальникӗсене тата командирсен командирне — Климент Йефремӑвич Ворошилӑва хӗрӳллӗн саламлать. Хӗрлӗ Ҫар ҫулпуҫне Совет Союзӗн Маршалне Ворошилӑв йулташа пӗтӗм зал нумайччен чарӑнмасӑр тӑвӑллӑ оваци тӑвать.

Йышӑнура пулнисем валли концерт пулнӑ.

(ТАСС).

Май праҫникӗ Шупашкарта

Митингра 20 пин ҫын ытла пулнӑ

Республика столици праҫникле тумланнӑ. Пур ҫӗрте те хӗрлӗ хӑмач йалавсем вӗлкӗшеҫҫӗ. Хӗрлӗ площӗде, унти трибунӑна Ленинпа Сталин портречӗсем, партипе правительство руководителӗсен тата ҫӗршыври йатлӑ ҫынсен портречӗсем, лозунгсемпе плакатсем, транспарантсемпе панносем капӑрлатса тӑраҫҫӗ.

Хула ӗҫхалӑхӗ митинга тухма хатӗрленет. 11 сехет тӗлнеле колоннӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри йурӑсемпе, музыкӑпа Хӗрлӗ площӗде пухӑнма тытӑнаҫҫӗ.

Пур ҫӗрте те йурӑ шӑрӑнать: телейлӗ те ирӗклӗ совет халӑхӗ Сталин ҫинчен, Тӑван ҫӗршыв ҫинчен, унӑн геройӗсем ҫинчен йурлать.

Кӑнтӑрла 12 сехет. Хӗрлӗ площӗд халӑхпа тулса ларнӑ. Трибунӑ ҫине республикӑри партипе правительство руководителӗсем хӑпараҫҫӗ.

Парти хула комитечӗн ҫекретарӗ Ахазӑв йулташ ӗҫҫыннисен Майӑн пӗрремӗш йачӗпе пухӑннӑ митингне уҫать. Площӗдре ала ҫупни тата „Интернационал" кӗрлесе кайать.

ПСК(б)П Обком ҫекретарӗ Дубӑв йулташ митинга пухӑннисене Обком тата Чӑваш правительстви йачӗпе саламлать. Вӑл майӑн пӗрремӗшне — пӗтӗм тӗнчери пролетариатӑн паттӑр вӑйӗсене пӑхса тухмали куна — Советсен ҫӗршывӗнчи ӗҫҫыннисем социализм ҫӗнтерӗвӗ йалавӗпа уйӑвлани ҫинчен, йут ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисем — вӑрҫа тата фашисӑма хирӗҫ кӗрешме пӗтӗм тӗнчипе пӗрлӗхлӗ халӑх фрончӗ тӑвас паллӑпа уйӑвлани ҫинчен калать.

— Фашиссем Испанипе Китай халӑхне йун ӑшне путарса вӗлересшӗн, — тет оратӑр. — Фашиссем Совет Союзӗ ҫине тапӑнма хатӗрленеҫҫӗ. Анчах Совет Союзӗ совет халӑхӗн мораљлӗ-политикӑлӑ пӗрлӗхӗпе, ӑна пӗтӗм тӗнчери пролетариат йуратнипе вӑйлӑ, хӑйӗн Хӗрлӗ Ҫарӗпе вӑйлӑ. Ӗпӗр чи малтанах хамӑр вӑй ҫине шанса тӑратпӑр. Сталинла пилӗкҫуллӑхсем пирӗн ҫӗршыва касса чиксе витерейми броньӑпа тата хурҫӑпа тумлантарчӗҫ. Ҫӗршыв умне вӑрҫа хӑрушлӑхӗ килсе тухсан, 170 мӗлйунлӑ пӗтӗм совет халӑхӗ партипе правительство пӗрре чӗнсенех, аслӑ Сталин пӗрре чӗнсенех хӑйӗн тӑван ҫӗршывне хӳтлеме тӑрӗ...

Сталин йатне асӑнсан площӗдре тӑвӑллӑн ала ҫупни кӗрлесе кайать.

— Союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене суйламали кампанире коммуниссемпе партире тӑманнисен сталинла блокне татах ҫирӗплетер!

Ленин — Сталин партийӗ тавра татах та тачӑрах пӗтӗҫер. Тӑшмансене совет ҫӗршывӗнче пурнӑҫ памастпӑр, пурне те пӗтеретпӗр!

Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Союзри Коммуниссен бољевикла Партийӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн тӑван аслӑ Сталин!

Унтан Шупашкарти тир-сӑран савӑтӗнчи рабочи Бызов йулташ сӑмах илет. Вӑл митингра пухӑннисене майӑн 1-мӗш йачӗпе саламласа, социализм ҫӗнтерӗвӗ ҫинчен, гражданӗсен аслӑ прависем ҫинчен калать.

— Пирӗн савӑт апрел планне 115 процет тултарчӗ, — рапӑртлать Бызов йулташ. — Планран иртерсе 1.500 мӑшӑр атӑ-пушмак туса кӑлартӑмӑр. РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлана кун тӗлне — ийунӗн 26-мӗшне ҫурҫул программине ытлашшипех тултарма сӑмах паратпӑр.

Фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла бандисене вилӗм!

Сывӑ пултӑр Майӑн 1-мӗшӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн атте, учитӗл Сталин йулташ!

Йулашкинчен Шупашкар гарнизонӗнчи ҫамрӑк красноармейецсем Совет влаҫӗшӗн тӗрӗс тӑма пулса правительствӑна хӗрлӗ приҫагӑ параҫҫӗ. Приҫагӑ текстне ССРС Верховнӑй Совет депутачӗ Чӑваш Тӗпҫтавком председателӗ Андрейӗва йулташ вулать.

— Я, сын трудового народа.. — тени пӗтӗм площӗде йанӑравлӑн илтӗнет.

Ҫамрӑк бойецсем ҫар техникине лайӑх вӗренме, дисциплинӑна ҫирӗплетме, Совет влаҫӗшӗн тӗрӗс тӑма пулса, пӗтӗм совет халӑхӗ умӗнче, партипе правительство умӗнче, тӑван ҫӗршыв умӗнче тупа турӗҫ.

Приҫагӑ парса пӗтерне. Андрейӗва йулташ красноармейецсене ӗпӗр капитализмлӑ йӗри тавралӑхра пурӑннине аса илтерсе, сыхлӑха ӳстерме, халӑх тӑшманӗсене тӗппипех тупса пӗтерме чӗнет.

Митинг хупӑнать. Площӗдре „Интернационал" йанӑрать.

Демонстраци пуҫланать.

Трибунӑ ҫуммипе пиншер ӗҫҫыннисен колоннисем иртсе кайаҫҫӗ. Чи малта осоавахимӑвецсем пыраҫҫӗ. Вӗсем хыҫӗнчен пионерсем, шкул ачисем, шап-шур кӗпелӗ физкуљтурницӑсем кӑшӑлпа упражненисем туса иртеҫҫӗ. Унта аслӑ шкулсенчи студентсем, хапрӑк-савӑтсенчи рабочисем, ӑслӑлӑхпа искусства работникӗсем, водниксем, чукунҫул строителӗсем т. ыт. те вӗҫӗмсӗр иртеҫҫӗ.

Колоннӑсенчи йалавсемпе плакатсем, лозунгсем совет халӑхне социализмӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсем патне чӗнеҫҫӗ, РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсене лайӑх хатӗрленсе ирттерме, коммуниссемпе партире тӑманнисен блокне тӗреклетме, халӑх тӑшманӗсене ним йулмиччен пӗтересе хума чӗнеҫҫӗ.

1938 ҫулхи майӑн пӗрремӗшӗнчи уйӑв — Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем Ленин — Сталин партийӗ тавра тачӑ пӗтӗҫнине, совет халӑхӗн мораљлӗ-политикӑлӑ пӗрлӗхне тата тепӗр хут демонстрацилерӗ.

С. Константинӑв.

Май уйавĕ Канашра

КАНАШ. (Хамăр корр.). Канаш хулинчи ĕççыннисем Майăн 1-мĕшне пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Уйав йачĕпе пулнă демонстрацине 12.000 çын ытла пуçтаранна.

Митинга ПСК(б)П райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ Майорăв йулташ уçрĕ. Вăл хăйĕн саламлă сăмахĕнче, кăçалхи май уйавĕ союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйламали кампанипе пĕр вăхăтра пулни çинчен РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене тĕплĕн вĕренесси çинчен каларĕ.

Унтан ПСÇЛКС райком çекретарĕ Константинăв, Канаш хула совечĕн председателĕ Никитин йулташсем, чукунçул транспăрчĕн Канашри туллимар вăтам шкулти пионеркă 10 çулхи Туççă Будайевă тата октябрйонка Љољă Сухановă саламлă сăмахсем каларĕç.

— Епĕр,—тет 7 çулхи Љољă,—совет çĕршывĕн чечекĕсем. Епĕр кунсерен йешерсе чечекленетпĕр. Епĕр çĕршыври чи телейлĕ ачасем. Мĕншĕн тесен, пире Сталин атте ачашласа çитĕнтерет. Спасибă Сталин аттене пире лайăх пăхса ӳстернĕшĕн!

Сталин йулташ йатне асăнсан халăх тăвăллăн алă çупса, халăхсен çулпуçне чысласа „урра" кăшкăрать.

Арк. Неçтĕрăв.

Çĕмĕрлере

Майăн пĕрремĕшĕнчи демонстрантсен колоннисене пит нумай илемлĕ те çутă плакатсемпе, Сталин йулташăн, Молăтăв, Ворошилов, Калинин, Йежов, Каганович т. ыт. йулташсен портречĕсемпе капăрлатнă.

Хĕвеллĕ уйар çанталăк. Çĕмĕрле хули çакăн пек нумай демонстрантсене нихăçанта курман. Чăвашсем, мордвасем, вырăссем алла-алăн тытăнса, Совет Союзĕнчи халăхсен никам çĕмĕрейми туслăхне палăртса колоннăсенче утса пыраççĕ. Демонстрацине 12.000 çын ытла тухнă. Чи малта „Большевик" савăт коллективĕ, ку савăт 4 уйăх программине срукчен 105,7 процент тултарнă.

„Большевик" савăт клубĕ çумĕнчи харпăрхăй пултарулăх кружокĕ площĕдре „Песня о Сталине", „Красная Москва" йурăсене йурласа пачĕ, кружок членĕсем тĕрлĕрен ташăсем ташларĕç.

Йулашкинчен физкультурниксен парачĕ пулчĕ.

Иваницкий.

Йанра, хавасла Май

Епир тухатпăр та сăлайăн,
Тавссиǃ тейетпĕр хĕвеле,
Саватпăр хĕрлĕ тĕслĕ Майăн
Пĕрремĕш числине йепле:
Урамсене тухса нумайăн
Йаратпăр кăкăра йуле,
Каçпа сатăмăрти пур кайăк
Йурлаччĕр чĕвел-чĕвелех,
Çĕклетпĕр йалава çӳле.

Анчах лере, лере каçатăн,
Тухатăн акă чикĕрен,
Çурхи куна та, савнăçа та,
Илемлĕ вăйла ĕмĕре
Пусмăрласа, хĕссе хăрушăн
Хупса тытаççĕ тĕрмере,
Унта хайар, тискер фашисăм,
Йулашки кунĕ çитнĕрен
Урса кайать те тилĕрет.

Кунта, хĕвел куçне уçсассăн,
Ирхи тĕнче сиксе тăрать,
Унчух епир вара хавассăн
Хута йаратпăр трактăра,—
Çурхи кĕвве итлер тинкерĕн
Тарри шăратнă йурăра,
Мерченлĕ асамат кĕперĕ,
Шыва асать те çырмаран,
Йарать пĕрремĕш çумăра.

Суркуннехи шăпчăк кĕввилĕн
Йантра, йантра, хавасла Май,
Бригадăсем хирте каç-ирĕн
Шавлана пек, кĕрле пĕрмай!
Фашисăм савнăçа тискерĕн
Хĕссе, хĕссе тăрать халех,
Анчах шăпи тулса хăпарĕ,
Сăхманĕпе вăл нимĕнле
Хупман, хупайĕ хĕвеле!

УХСАЙ ЙАККĂВĔ.

Май çăлтăрĕ

Куратăп еп: куллен сӳнеççĕ
Пусмăр тĕнчин çăлтăрĕсем,
Мăн тӳпере Май çăлтăрĕ çеç
Тăрать, вут-çиçĕм пек, çиççе,

Ун айĕнче—кĕрен йалавла,
Чечек тĕс-питлĕ çĕршывсем;
Ун айĕнче çиçет мухтавлă
Май уйавне кĕтен илем.

Май йачĕпе хĕвел пăхсассăн,
Мăн аслă çĕршывра пайан
Чи ирĕк халăхсем хавассăн
Шăратĕç йурă йан та йан.

Май çăлтăрĕ! Ес пĕлĕт çийĕн
Çунса вĕç маларан мала.
Ес, Май уйавĕн хыпарçийĕ
Пулса, кайсам Анăçала.

Сĕм пĕлĕтре выртать çулу сан,
Анчах, сӳнми çут ĕмĕт пек,
Ес йарăнăн хитрен, хăйулăн
Совет çĕршывĕн сăнĕпе.

Ес йарăнăн тискер фашисăм
Çĕршывĕ урла йалкăшса,
Ĕçхалăх чĕрине çут сисĕм,—
Çут ĕмĕт çулăмĕ парса.

Хайарран вĕрĕ кăнтăр çилĕ,—
Çутать Май çăлтăрĕ, сăна:
Пĕр йалав айĕн кĕтсе илĕ
Испани халăхĕ сана.

Май çăлтăрĕ, чи çутă çăлтăр,
Çит çĕнтерӳлĕ Китайа.
Пĕтĕм тĕнче çинче ес йалтăр,
Ес—ирĕклĕх палли майан.

Пайан пĕрех, пĕр ĕмĕт пирĕн,
Шанатпăр: час ак пĕтĕмпех
Планетă—Çĕр те пулĕ ирĕк
Совет çĕршывĕн сăнĕ пек.

АЛЕКСАНДР АЛКА.

Республикăри пичет

ССР Союзĕн Сталинла Конституцине пирĕн çĕршыври çĕршывнисем çĕнсе илнĕ пысăк правасемпе тивĕçлĕхсене тĕплĕн çырса хунă.

„Ĕççыннисен интересĕсемпе килĕшӳлĕ тата социализм йĕркине çирĕплетес майпа — тенĕ ССРС Конституцин 125 статйинче—ССР Союзĕн гражданĕсене саккун çакăн пек ирĕклĕхсем гарантилет:

а) сăмах ирĕклĕхĕ,

б) пичет ирĕклĕхĕ,

в) пухусемпе митингсен ирĕклĕхĕ,

г) урамри шествисемпе демонстрацисен ирĕклĕхĕ.

Гражданĕсен çав прависем ĕççыннисемпе вĕсен организацийĕсене çав правасене пурнăçа кĕртсе пыма типографисем, хут запасĕсем, обшественнăй çуртсем, урам ем, çыхăну хатĕрĕсем тата ытти кирлĕ материалла условисем пани пе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ".

Большевикла пичете Ленинпа Сталин пусăрса пиксĕлене. Большевикла пичет Ленинпа Сталин йĕртсе пынипе ӳссе хăватланнĕ. Пирĕн пичет—çĕршывсен пичечĕ.

Революцичченхи пирĕн Чăваш республикинче пĕр хаçат-журнал та тухман. Халăх хут пĕлмен. Вĕсем хаçат-журналсем çырăнса илсе вулаайман. Ун пухне пирĕн республикăна хаçат-журнал питĕ сахал килсе тăнă. Вĕсене те рабочисемпе хресченсем вуламан, пупсем, сутуçăсем, тăван пуянсем тата кулаксем çеç вуланă.

Халь пирĕн республикăра Шупашкарта 4 хаçат, районсенче—25 хаçат тата савăтсемпе колхозсенче нумай тиражла хаçатсем 7 тухса тăраççĕ. Вĕсен мĕн пур тиражĕ 150 пине çитет. Хаçат тиражĕсем çулран çул ӳссех пыраççĕ.

Акă „Чăваш Коммуни" хаçат тиражĕ мĕнле ӳссе пынине илепĕр. 1935 çулта унăн тиражĕ — 7.752 екземпляр пулнă. 1936 çулта—11.400, 1937 çулта—11.890 екземпляр пулнă, кăçал, 1938 çулта „Чăваш Коммуни" хаçатăн тиражĕ 17.000 екземплярпа çитре. Парти Тĕп Комитечĕ Обком, халăх ыйтăвне шута илсе, „Чăваш Коммуни" хаçат тиражне 20.000 екземплярпа çити ӳстерме йышăннă.

„Красная Чувашия" хаçат иртнĕ çул 21 пин екземпляр тухнă, кăçал 25 пин екземпляр тухать. „Пионер сасси" хаçат 41 пин екземпляр тухать. Кусемсĕр пуçне республикăра 6 журнал тухать. Вĕсен тиражĕ 12 пине çитет.

Чăвашсен Государствă издательстви кăçал 215 ятлă кĕнеке кăларать. Вĕсен тиражĕ 2 мĕлйуна яхăн.

Республикăри тата районсенчи хаçатсен бюджечĕ иртнĕ çулта танлаштарсан 25 процент ӳсрĕ.

Кашни районра типографи пур. Кăçал вăл типографисенче шрифтсен хуçалăхĕ ӳсмелĕ, пичетлекен пысăк машинăсем пулаççĕ. Государства Шупашкарти типографине ротацилĕ машинă парать. Вăл машинăна лартсан, хаçатсем хăвăрт, вăхăтра тухас ĕç лайăхланать. Шупашкарти типографийĕх линотип машини валли чăваш челхипе туса хатĕрленĕ матрицăсем тунать.

Районри тата республикăри хаçатсене валли хут çителĕклĕ таран пулать. Партин Чăваш Обкомĕ кăçал колхозсенчи стена хаçачĕсем валли 65 пин макет хатĕрлесе колхозсене йăрса пачĕ.

Çак çитĕнӳсем вĕсем халăхăн культурăллăхĕ ӳсни çинчен, Сталин йулташ партин чи хăватла, чи çивĕч хĕçпăшалĕ пулса тăракан пичетĕн кунпа мар, сехетпе ӳсмелли çинчен калана сăмахсем чаплăн пурнăçа кĕрсе пынине кăтартса параççĕ. Вăл çитĕнӳсем совет гражданĕсен саккунпа çирĕплетсе панă прависене çĕре пурнăçа кĕртнине пирĕн çĕршывăн пур условисем те çителĕклипе кăтартса параççĕ.

* *

Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсем пулман пулсан, пирĕн çитĕнӳсем татах та нумайрах, пысăкрах пулнă пулĕччĕ. Издательства тата районти пичет аппарачĕсене ларнă халăх тăшманĕсем чылай вăхăт хушши сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Троцкиссем, бухаринецсем тата буржуазла националиссем издательства ĕçĕнче кăна мар, вĕсем аслăлăхпа культура учрежденийĕсенче йĕртсе пырас ĕçе те хĕсĕнсе кĕрсе, хăйсем кăларакан кĕнекесенче троцкисла тата буржуазла националисла сулĕĕрне сĕтĕрсе кĕрессине ĕçлене. Ăна туна те вĕсем. Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçне пула шкулсем учебниксĕр, партипе комсомол организацисем марксисем-ленинисем классикĕсен произведенийĕсемсĕр тăрса йулчĕç. Кăçал Чăвашиздатăн учебниксене пĕтĕмпе çĕнĕрен кăлармала пулчĕ. Çавăн пекех çăмăлла кусăрса кăларнă Ленин — Сталин произведенийĕсене те тепĕр хут çĕнĕрен кăлармала пулать.

Халăх тăшманĕсем хаçат-журналсене кăларас ĕçсенче те сахал мар сиенленĕ. Вĕсем ку тĕлĕшпе полиграфи промышленăçне йухăнтарса йана. Хăйсен сăтăрла ĕçне туна çăмăлтарах пултăр тесе, типографисене тĕрĕслемен çынсене, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса, ĕçпе йĕрсе кайнă çынсене, шулĕксене ĕçе илнĕ. Хут вăрланă, учот ĕçне йухăнтарнă, производствăра хуçасăрлăх туса хунă, букваçене пăтраштарнă т. ыт. те.

Тӳрех калас пулать, Чăвашполиграфтрестăн çĕнĕ руководстви халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе ытла та мĕнелтетсе ĕçлет-ха. Чăнах та, Полиграфтрестăн управляющийĕ Никифăрăв йулташ сăмахпа нумай тума пулать. Анчах унăн сăмахсем ĕçпе сыхăнмаççĕ.

Полиграфи промышлĕннăçĕ малтанхи пекех йулса пырать. Пысăк убытка парать. Типографи аппарачĕсене ытлашши ӳстерсе йана.

Вырăнти промышленнăç Халăх Коммиссариачĕн Полиграфтрестăн çак пысăк çитменлĕхĕсемпе килĕшсе ĕçлес йăлана пăрахса, полиграфпромышленнăçа малти ретсе кăларассипе ĕçлеме тытăнмала.

С. Карташов.

Хаçат редактăрĕ

Иртнĕ уйăхри ĕçсене пăхса тухма пухăннă пуху чылайа тăсăлчĕ. Тухса каласакансем цех начар ĕçленине палăртса, пулнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермеле, тесе кăтăртса хăварчĕç.

Ку пухура авса пукансем тăвакан цехри „Гнутарь" стена хаçат редактăрĕ Галин йулташ та тухса каласрĕ. Вăл хăйĕн смени çинчен, стена хаçачĕн ĕçĕсем çинчен ытларах чарăнса тăчĕ.

— Начар ĕçлетпĕр.. Айăпĕ хамăрта. Ĕçри пĕтĕм çитменлĕх—ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилеменнинчен, ĕç дисциплинине кирлĕ пек тĕрĕс йĕркелеменнинчен килет,—терĕ Галин йулташ. Çавăнтах вăл стена хаçат ĕçне рабочисем сахал хутшăннине палăртса, малашне хаçат ĕçне хутшăнма чĕнчĕ.

Цех начар ĕçлени стена хаçат çине пысăк ответлăх хунине Галин йулташ лайăхах ăнланса илнĕ. Хаçат çитменлĕхсене пĕтерес çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Галин хаçат тавра станок çинче ĕçлекен рабочисене ытларах йавăçтарма пуçланă. Вăл кашни рабочи патне пырса каласнă, çырма хушнă, вĕрентнĕ. Редактăр хăй тавра актив организацилене. Çапла тунă май, хаçата çырса тăракансен шучĕ ӳссех пынă, хаçат хăй те содержанипе формă йенчен лайăхланнă. Уйрăмăнах хаçатра пĕчĕк заметкăсем, карикатурăсем, кулăш пайĕсем вулакансене интереслентернĕ.

Вăл редактăрта шăп çулталăк ĕçлет. Кĕске вăхăт хушшинчех хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Хаçата халĕ ĕлĕкхипе пĕртте танлаштарма çук, вăл тĕпренех улшăнчĕ. Çаваншăн хаçата рабочисем йуратаççĕ, ăна хаклаççĕ. Хаçат массă хушшинче пысăк авторитетпа усă курать.

„Гнутарь" хаçат малтанхи вăхăтсенче уйăхра пĕрре тухса тăнă, халĕ икĕ ернере пĕрре тухать. Кусулта 8 номĕр тухрĕ. Кунсăр пуçне тата хăшпĕр чухне бюллетенсем кăлараççĕ.

Хаçат лайăх ĕçленипе пĕрле цех та лайăх ĕçлет. Иртнĕ çулта цех плана тултарса пырайман пулсан, кăçалхи çулăн пĕррĕмĕш квартал планне 102 процент тултарса комбинатĕпе иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Ĕлĕкрех нормăна тултарса ĕçлейменнисенчен халĕ чылайĕшĕ стахановецсен ретне хутшăнчĕç. Хаçат ку тĕлĕшпе пысăк пулăшу парать.

Хаçат хăй тавра рабочисене, инженерсене, техниксене йавăçтарать. Инженерсем: Пономарйова (халĕ вăл сушильнăй хуçалăх начальникĕнче ĕçлет), Сопăв, техник—комсомолĕц, Мосолов т. ыт. йулташсем стена хаçачĕн сывăх корреспонденчĕсем пулса тăраççĕ.

Галин йулташ производствăра та паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Вăл комбината бригадира килсе кĕнĕ, халĕ çмена маçтарĕ. Унăн çмени плана йаланах 107—118 процентшар тултарса ĕçлет. Кунсăр пуçне вăлах цехри агитатăр.

Х. Л.

„Шурă розă" калав килĕшрĕ

Епĕр, Н çар часĕнчи чăвашсем, И. Тукташăн „Чăваш Коммунĕ" хаçатра пичетленнĕ „Шурă розă" калавне йуратса вуларăмăр.

Ку калав пирĕн тапхăрти çамрăк çынна ӳссăн кăтартса парать. Ăна вуласан, кашни çыннăн чĕри хавасланать, вăл çĕршыва лайăхрах сыхлас кăмăлпа хавхаланать.

— Манăн Ахмет пек герой пулас килет,—терĕ К. Иванов красноармейĕц „Шурă розă" калава вуласа тухнă хыççăн.

Тăван çĕршыва паттăрăн сыхлакансем Хĕрлĕ Çар ретĕнче нумай, анчах вĕсене кăтартса парас тĕлĕшпе чăваш писателĕсемпе поечĕсем сахал ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе Тукташ çырнă калав—пĕррĕмĕш утăм пулать, тесен тĕрĕс пулĕ. Малашне чăваш писателĕсемпе поечĕсене çĕршыв оборони çине ытларах çаврăнса пăхма ыйтас килет.

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине Чăваш писателĕсен çĕнĕ произведенийĕсене цĕрмайăх пичетлĕсе пыма сĕнетпĕр.

Красноармейĕц Б. Скворцов.

Петергоф хули.

Тăшманла ĕçсен йулашкисене хăвăрт пĕтерер

Епĕр, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсем, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ийунĕн 26-мĕшĕнче иртермеле тунине хĕрӳлĕн саламлатпăр. Епĕр суйлава тивĕçлипе хатĕрленетпĕр. Çуракине большевикла иртерме, йалхуçалăхĕн пур пайĕсенче те тăшманла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерме, халăх тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа кăларма, колхоз уставне пăснисене тӳрлетме, дисциплинăна çирĕплетме, ĕçри оперативлăха ӳстерме пулатпăр.

Никам çĕнейми Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин йалавĕпе çĕнĕ çĕнтерӳсем патне малала!

Сывă пултăр коммунисемпе партире таманнисен блокĕ!

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин!

Осипăв.

Йалкорсене тата колхозсенчи стена хаçачĕсен редактăрĕсене

Колхозсенчи стена хаçачĕсен редактăрĕсемпе йалкорсен „Крестьянская газета" çумĕнчи канашлăвĕнче пулнисен çырăвĕ

„Крестьянская газета" чĕннипе Мускавра пухăнса, епĕр хамăрăн йалкор ĕçĕсем çинчен, стена хаçачĕсен ĕçĕсем çинчен виçĕ кун хушши каласрăмăр, пĕр-пĕрин опычĕсемпе йулташла паллашрăмăр, кам мĕнле ĕçлени çинчен пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлтĕмĕр.

Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнă хыççăн, епĕр ĕçйалкорсен йухăмĕ хăватлăн çĕкленнине тата тепĕр хут ĕнентĕмĕр.

Хăшпĕр çĕрте хаçатсене йертсе пырас ĕçе кĕрсе кайнă халăх тăшманĕсем, ĕçйалкорсен йухăмне кайала чакарма хăтланнă, ĕçйалкорсен çырăвĕсене пĕтернĕ. Троцкисла-бухаринла сăтăрçăсем, диверсантсем, шпионсем ĕçйалкорсен йухăмĕ чакса вăйсăрланса пырать тесе усал елексарнă. Тăшмансен усал шухăшĕсене çапса аркатнă. Ленин — Сталин аслă партийĕ йертсе пынипе ĕçйалкорсен йухăмĕ ӳсет те тĕрекленет.

Стена хаçачĕ колхоз пурнăçĕн йалине кĕнине, кашни колхознике кирлĕ ĕç пулнине епĕр пурте пĕлетпĕр, ун çинчен епĕр канашлура каларăмăр. Стена хаçачĕ лайăх ĕçленĕ çĕрте пур çĕрте те ăна колхозниксем йуратаççĕ, хисеплеççĕ, хăйсен коллективлă организатăрĕ, колхозăн политикăлă тата культурлă ĕçĕсене пуçаракане, колхозниксен помошникĕ, тесе шутлаççĕ. Колхозсенчи стена хаçачĕсемпе вĕсен йалкорĕсем халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре партипе совет власне пысăк пулăшу параççĕ. Çапла, тĕслĕхрен, пирĕн йулташ, „Колхозник" стена хаçат редактăрĕ („Ленинский партизан" колхоз, Тилигуло-Березански район Николайĕвск облăçĕ) Бойарчук йулташ, унăн пичĕпне йалкор ĕçне тунăшăн тăшмансем вĕлерне хыççăн йалкор пулса тăчĕ. Пирĕн канашлура пулнисем—„Колхозное село" стена хаçат радактăрĕ („Червонный колос" колхоз, Днепродзержински район, Днепропетровск облăçĕ) Чирва йулташ, „До новых перемог" стена хаçат редактăрĕ („Первое мая" колхоз, Белопольски район, Харькăв облăçĕ) Ворон йулташ вĕсем сăтăрçăсене мĕнле çине тăрса тăрăшыв çине кăларни çинчен каласа пачĕç.

Çакнашкал большевикла сыхăлăх, кашни пуçарнă ĕçе вĕçне çитерессишĕн çинĕ тăни пур стена хаçатсен тата йалкорсен ĕçĕнче пулмала.

* *

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавне хатĕрленсе иртернĕ чухне стена хаçачĕсем нумайĕщĕ партипе совет государствине пысăк усă пачĕç. Çак вăхăтра колхозсенчи стена хаçачĕсем çĕнĕ йалкорсене ĕçе нумай хутшăнтарчĕç, вĕсемпе пĕрле суйлав кампанине активлă хутшăнчĕç.

Сухорукăв йулташ редакцилесе кăларакан „Путь к социализму" стена хаçачĕ (Молочански район, Днепропетровск облăçĕ) суйлав кампани вăхăтĕнче суйлав участкинче тухса тăнă, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—суйлав кунĕнче пĕр кунта икĕ номĕр тухнă. Бойарчук редакцилесе кăларакан стена хаçачĕ (Тилигуло-Березански район, Николайĕвск облăçĕ) тата Неткал йулташ редакцилесе кăларакан хаçат („Днипрельстан" колхоз, Червоноармейски район, Днепропетровск облăçĕ) редколлеги членĕсемпе йалкорсем агитатăр пулса ĕçленĕ. Чирва редакцилесе кăларакан стена хаçачĕ („Червонный колос" колхоз, Днепродзержински район, Днепропетровск облăçĕ) агитатăрсем Сталинла Конституципе суйлав саккунне вĕрентекен кружоксен ĕçĕсене тĕплĕн асăрхаса тăнă, йалкорсенчен агитатăрсем тунă. Халĕ вĕсем УССР Верховнăй Совет суйлавне пит те активлăн хутшăнма хатĕрленеççĕ.

Суйлавсене хатĕрленесси—пĕтĕм пичетшĕн, çав шутрах колхозсенчи стена хаçачĕсемшĕн, пирĕншĕн, ĕçйалкорсемшĕн политикăлă пысăк ĕç. Иртнĕ суйлав кампанинче туйаннă пуйан опытпа усă курар, ăна нумайлатар, иртнĕ суйлавра тунă йăнăшсене тăвар мар. Партипе совет власне союзлă, автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавне тата лайăх, тата ытларах организацилĕ иртерме пулăшар.

* *

Пирĕн канашлура пулнисем пĕр-пĕрин питĕ хаклă опычĕсемпе паллашрĕç. Çак канашлура нумай каланисем пире хамăрăн ĕçсем çине урăхла пăхтарчĕç.

Епĕр мĕнле тĕп выйăдсем патне пытăмăр?

Пирĕннĕн чи малтан çакă пит те паллă: **Стена хаçачĕ массăлă пулмала.** Стена хаçачĕ йĕркелĕ майлашса тухтăр, вăхăтра тухса тăтăр, анчах унăн йалкорсем сахал пулсан, кашни номĕртех çав 3 — 5 — 7 çынах çыраççĕ пулсан, вăл—колхозри массăлă хаçат мар.

Пирĕн канашлура пулнă Ковальчук йулташ редакцилесе кăларакан стена хаçачĕн çитĕнĕвĕсем пирки нимĕн тавлашмали те çук тесе шутлатпăр: унăн 34 йалкор пур, çак стена хаçачĕн пур çĕрте те: уйхир ĕçĕн бригадисенче те, трактăр бригадисенче те, фермăсенче те хăйĕн куçĕ пур.

Пирĕн тепĕр йулташ—Сухорукăв редакцилесе кăларакан стена хаçачĕ 1937 çулта 900 çыру пичетлесе кăларни çинчен пĕлнипе епĕр савăнтăмăр.

Хамăр канашлура редколлеги тĕрĕс ĕçленĕ чухне, унти обйазанăçсене тĕрĕс валеçнĕ чухне, кашни хăйĕн мĕн тумалине пĕлнĕ, хăйĕн ответлăхне, пĕтĕм стена хаçат ĕçĕшĕн ответлă пулнине туйнă чухне редколлеги мĕнле пысăк вăй пулни çинчен нумай каласрăмăр.

Епĕр Неткал, Сухорукăв, Закальукин йулташсем йертсе пыракан редколлегисен ĕçĕсене ытти редколлегисен пурин те хăйсен ĕçĕнче усă курмали пример тесе палăртатпăр, çак редколлегисем йалкорсен канашлуне пухаççĕ, унта хăйсен стена хаçачĕсен ĕç плайĕсене сӳтсе-йаваççĕ.

Закальукин йулташ йертсе пыракан стена хаçачĕ çумĕнче йалкорсен фото-кружокĕ ĕçлет, йалкорсем тунă фотографисем стена хаçатне чăнниех те хитрелетеççĕ; вĕсем колхоз пурнăçĕнчи ĕçсене интереслă, чĕрĕ, çивĕччĕн çутатма пулăшаççĕ.

Стена хаçат редактăрĕ Ковальчук йулташ йалкорсем аçта тата мĕнле вĕреннипе интересленет, заочнă вĕренмели лекцисене илсен, вĕсене йалкорсемпе пĕрле вĕренеççĕ.

Коллективлă ĕçĕн çак паха примерĕпе епĕр усă куратпăр, çак опыта саратпăр, çакна тума редактăрсене, редколлегисене, колхозсенчи стена хаçачĕсен йалкорĕсене пурне те чĕнетпĕр.

* *

Колхозри стена хаçачĕ—организацилекен пысăк вăй. Ун тавра колхозниксен масси пĕрлешсе тăмала, стена хаçачĕн политикăлă тата обшĕствăлă пур ĕçсенче те партин помошникĕ пулмала.

„За большевистский урожай" (Штейнгард йачĕпе тăракан колхоз, Белореченски район, Краснодар крайĕ) стена хаçат редколлегийĕпе пĕрле агитатăрсемпе политвулавçăсен канашлăвĕ тунă Чубарĕвă йулташ опытне питĕ хапăл туса йышăнатпăр.

Ворон тата Бойарчук йулташсен опычĕсене те кирлĕ тесе шутлатпăр, вĕсем хăйсен колхозсенчи оборонă ĕçне пуçаракансем пулнă, Осоавиахим, стрелковăй спорт кружокĕсем организациленĕ, çав кружоксене колхозниксене нумай—çамрăккисене те, старниксене те, арçынсене те, хĕрарăмсене те хутшăнтарнă. **Ку ĕçе халĕ питĕ кирлĕ, пур майсемпе те, пур вăйсемпе те оборонă ĕçне вăйлатма пулăшмала, хамăрăн социалисăмла тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетмеле.** Çак ĕçе пур стена хаçачĕсен, пур редколлегисен, пур рабкорсемпе йалкорсен те пулăшмала.

* *

Стена хаçатĕнче пит те лайăх, тĕрĕс, кирлĕ заметкă пичетлесе кăларнă пулсан та, ку çур ĕç çеç пулнине епĕр пĕлетпĕр. **Кашни заметкă тăрăх результат кирлĕ.** Çитменлĕхсене пĕтермеле, стена хаçачĕ çырса пĕлтернĕ лайăх опыта пур çĕрте те сармала.

Çавăнпа та епĕр „За большевистский урожай" стена хаçачĕн опытне йышăнатпăр, çак хаçатăн редактăрĕ Чубарĕвă йулташ стена хаçатĕнче тухнă материалсене колхоз правленин активпа пĕрле пулакан ларăвĕнче сӳтсе-йавма лартать.

Колхозниксем стена хаçатне çырнă заметкăсем район руководствине тивеççĕ пулсан, колхозниксене ответ пама колхоза райĕçтăвком председателĕ, радиоузел начальникĕ, районти ытти работниксем ыйнă.

* *

Пирĕн канашлура пулнă „Красноборец" стена хаçат редактăрĕ („Красный бор" колхоз, Лычковски район, Ленинград облăçĕ) Шустрăв йулташ лайăх ĕç пуçарнине обйазательнă палăртмала, вăл стена хаçатне пур колхозниксене те вулама тăвать. Çамрăк ачасем, шкула çӳрекенсем вĕренмен вăхăтра стена хаçачĕн йатарласа кăларнă номĕрĕсене шчитсем çинче уйра бригадăсем тăрăх, фермăсене, пахчасене, выльăх пăхакансем патне—колхозниксем ĕçлекен пур çĕре те илсе çӳреççĕ. Епĕр çак опытпа усă курасшăн, ытти стена хаçачĕсене те çакна тума сĕнетпĕр.

* *

Епĕр çакна калама тивĕçлĕ тесе шутлатпăр: **стена хаçачĕсене, вĕсен редколлегисене парти организацийĕсен куллен йертсе пыни кирлĕ, анчах çакнăшкал йертсе пырасси вырăнсенче пур çĕрте те тивĕçлĕ вырăнта мар.** Парти руководствине вăйлатмала, стена хаçат редколлегисен ĕçĕсене час-часах тĕрĕслемеле, редколлегисенчен отчот ыйтмала, йăнăшсене кăтартмала, тӳрлетмеле, çавнашкал йăнăшсем малашнехи ĕçсенче ан пулччĕр.

Стена хаçачĕсене лайăх йертсе пынă тĕслĕхе партин Шчербиновски райкомĕ (Карснодар крайĕ) кăтартать. Вăл нумай пулмасть темиçе колхозсенчи стена хаçат редактăрĕсен докладне тата районти хаçат редактăрĕн содокладне итленĕ. Кун хыççăн парти райкомĕ кирлĕ решени йышăннă, вăл районти стена хаçачĕсене малашне чылай лайăх ĕçлеме пулăшать.

* *

Районти тата облăçри хаçат редакцисенчен епĕр мĕнле пулăшу кĕтетпĕр? Чи малтан стена хаçачĕсен редактăрĕсемпе йалкорсене вĕрентме час-часах ĕçлĕ консультацисем тума, стена хаçачĕсем çинчен çырнă обзорсене пичетлеме ыйтатпăр.

Вĕренӳ—пирĕншĕн, стена хаçачĕсен редактăрсемпĕн, чи пысăк, чи кирлĕ ĕç. Канашлура пулнисем пурте тенĕ пекех „Крестьянская газетăн" колхозсенчи стена хаçачĕсен редактăрĕсен заочнăй курсĕнче вĕренекенсем. Епĕр хамăр ĕçрен тата йулташсен ĕçĕсенчен хаçатсен задачине, стена хаçат редактăрĕн обйазанăçне тĕрĕс ăнланма, пĕтĕм ĕçе организацилеме пире вĕренӳ мĕн пайне куратпăр.

Анчах та пур чухне те заочнă вĕренмели майсемпе туллин усă курмаççĕ. Тĕслĕхрен, пирĕнтен нумайăшĕ пирĕн пата йарса паракан лекцисене вĕренме редколлегин ытти членĕсемпе йалкорĕсене хутшăнтарман. Акă тĕслĕхрен, Бойарчук тата Ковальчук йулташсем лекцисене пĕтĕм редколлеги членĕсемпе, йалкорсемпе пĕрле вĕренеççĕ. Чубарĕвă йулташ хăйĕн стена хаçачĕн ĕçĕсем çинчен редактăрсемпе, йалкорсен районти канашлăвĕнче доклад тунă. Сухорукăв йулташ хăйĕн опытне начар ĕçлекен стена хаçачĕсене пама ытти колхозсене кайса çӳренĕ.

Пирĕн çак опытсене хамăрăн ĕçе кусармала, хамăрăн пур йулташсене — колхозсенчи стена хаçат редактăрĕсене те çакна тума чĕнетпĕр.

* *

Майăн 5-мĕшĕ — большевикла пичет кунĕ çывхарать. Епĕр çак праçнике пире парти Тĕп Комитечĕ вĕрентнĕ пек иртерме пулатпăр, стена хаçат редактăрĕсене пурне те çакна тума чĕнетпĕр. Пирĕн хамăр ĕçсем çинчен колхозниксем умĕнче отчотсем тумала, пичет кунĕпе массăпа çыхăну тытассине сарма, çирĕплетме усă курмала.

Епĕр çине тăрса вĕренсен, большевисăма алла илсен, массăпа çыхăну тытассине пĕрмайăх сарсан, колхозсенчи стена хаçачĕсем Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, хамăрăн социалисăмла аслă тăван çĕршыв ĕçĕпĕн тата лайăхрах ĕçлекен пулĕç.

Апрелĕн 20—23-мĕшĕсенче „Крестьянская газета" çумĕнчи стена хаçат редактăрĕсемпе йалкорсен канашлăвĕнче пулнă 44 çын алă пуснă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Комсомолĕцсем парти ретне кĕреççĕ

Куславкка районĕнче ССРС Верховнăй Советне суйлана вăхăтра агитаципе массăлă ĕççенче хăйсене палăртнă комсомолĕцсем 50 шутланаççĕ. Агитатăр-комсомолĕцсем ССРС Верховнăй Советне суйлана вăхăтри паха опытсене тĕплĕн шута илсе, хаљ вăл опытсемпе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес ĕçре усă курса, суйлавсене татах та лайăх хатĕрленсе ирттерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Комсомол райкомĕ производствăра тата агитаци ĕçĕнче хăйсене палăртнă, Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса ĕçлекен комсомолĕцсене парти ретне куçарса пырат. Комсомол райкомĕ парти ретне кĕме 50 комсомолĕца рекомендаци панă. Вĕсенчен чылайĕшĕ хисеплĕ агитатăрсем.

Ака, Кармăшри Гафиатулина Галина комсомолкă пĕтĕм районĕпе палла агитатăр. Вăл пĕчĕкренех ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле пуйансем патĕнче ĕçлесе асапра ÿснĕ тутар хĕрĕ. Хаљ йалти тулли мар вăтам шкул директăрĕ пулса ĕçлет. Вăлах комсорг. Гафиатулина йулташ ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлана вăхăтра участкăри суйлав комиççи çекретарĕ пулса ĕçленĕ. Суйлавçăсем хушшинче агитаципе массăлă ĕççене сарса йарас йеçпе нумай паха ĕççем тунă. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес ĕçре те лайăх ĕçлесе пырат. Парти пуçламĕш организаципе пĕрле шкулти пур учителсене те бригадăсем çумне çирĕплетсе тухнă. Çурхи акана тухнă кунах бригадăсенче стена хаçачĕсем кăларас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку ĕççенче каллех Гафиатулина хăй паха пример кăтартса ĕçлесе пырат. Нумай пулмаст ăна парти райкомĕ ПСК(б)П членĕн кандидатне илнĕ.

Минкăшри комсомол комитет çекретарĕ Сорокина Клавдийа йалти çамрăксем хушшинче агитаципе массăлă тата культурăлă ĕççене лайăх йĕркеленĕ. Вăл комсомол йышне ÿстерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлесе пырат. Комсомол пуçамĕш организацинче малтан виçĕ комсомолĕц кăна пулнă. Хаљ 12 комсомолĕца çитнĕ. Сорокина йулташ та районри агитатăрсен йышĕнче лайăххисенчен пĕри шутланат. Унăн мухтавлă ĕççене шута илсе комсомол райкомĕ ăна парти ретне кĕме рекомендаци панă. Нумай пулмаст Сорокина йулташа парти членĕн кандидатне илнĕ.

Çавăн пекех комбинатри стахановĕцсене Йе. Морскова, Г. Алексейĕв тата Çтепанăва йулташсене те парти ретне илнĕ. Вĕсем виççĕшĕ те агитатăрсем. Морскова йулташ иртнĕ суйлавра доверĕннăй пулса ĕçленĕ. Алексейĕв йулташ комбинатра ÿссе çитĕннĕ комсомолĕц. Вăл комбината пырса кĕрсенех грузчик пулса ĕçленĕ, хаљ—лаборант. Çтепанăва йулташ та рйадовой работницăран завком председателне çити ÿснĕ. Вĕсем производствăра стахановла ĕçленипе пĕрлех, общĕствăлă ĕççенче те активлă хутшăнса ĕçлеççĕ.

Районĕпе чи лайăх агитатăр-комсомолĕцсене 16 çынна парти ретне илнĕ.

М. Митрофанăв.

Пуху ирттерме çурт тупайман

ЙĔПРЕÇ. ПСК(б) Парти райкомĕн планĕ тăрăх, „Спотара“ хăма çуракан савăтри парти пуçламĕш организацинче райком отчотне апрелĕн 22-мĕшĕнче туса ирттермеле пулнă. Пуху пуласси çинчен парторг Павлăв йулташа ерне малтан пĕлтернĕ. Анчах, Павлăв йулташăн ответсăрлăхĕпе пула, пухăва палăртнă кун ирттереймен. Коммуниссем килте пулманнипе тепĕр куна куçарнă. Иккĕмĕш кунĕнче те Павлăв йулташ пуху ирттерме çурт тупса паман. Коммуниссен пĕр çуртран тепĕр çурта куçса çÿремеле пулнă. Йулашкинчен, Павлăв йулташ сивĕ çуртра парти пухăвне ирттернĕ. Çакă ĕнтĕ парторг Павлăв йулташ партин йĕртсе пыракан оргăнĕсен суйлавне ирттерес ĕç çине çийелтен пăхни çинчен калат. Кун пирки уйрăм коммуниссем хăйсем те пухура каласа пачĕç.

ПСК(б) Парти райкомĕн отчотне итленĕ хыççăн, пренире коммуниссем пурте тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен çитменлĕхĕсене парти райкомĕн ĕçĕпе çыхăнтарса критиклерĕç. Парторг Павлăв йулташ коммуниссене пурне те вĕренĕве йавăçтарас пирки сахал ĕçленĕ. Савăт директăрĕ Четайĕв йулташ ниçта та вĕренмест. Парти райкомĕ савăтри рабочисем хушшинче политикăла-массăлă ĕçе кирлĕ вырăна лартас шутпа кунта вăрăм вăхăтлăха Громăв коммуниса йана пулнă, вăл хăйĕн ĕçне питĕ çийелтен тăват. Пайанхи куна рабочисем хушшинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне ирттермели Положенисем çинчен вĕрентме пуçăнман. Парти райкомĕ савăтри çитменлĕхсене пĕтерме парти пуçламĕш организацине сахал пулăшнă.

Пренире тухса каласнă йулташсем çак çÿлте асăннă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, партилĕ-массăлă тата агитацилĕ-пропагандăлă пĕтĕм ĕçе вăйлатма, кашни коммунисăн политикăлă активлăхне пур майпа та ÿстерсе пыма тата политикăлă сыхăлăха хăпартма хушса хăварчĕç.

Ф. Захарăв.

Агитатăрсем уйра ĕçлеççĕ

Аслă Чакри (Вăрмар р.) колхоз çуракине анаçлăн ирттерсе пырат. Колхозра пурĕ 12 агитатăр, пурте вĕсем уйра бригадăсенчи колхозниксене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентеççĕ. Кунсăр пуçне тата вĕсем йут çĕршывсенче пулса иртекен ĕççем çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса пăраççĕ.

В. Андрийанăв.

Березанск МТСтанцинчи (Киййв облăçĕ) хĕрарăмсен трактăр бригади кашни урапала трактăрпа сезонра 1100 гектар сухалама обязательства илнĕ. О. Наконечнайа трактăристкă хăйĕн сменинче 600 гектар сухалама пулат.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: О. Наконечнайа трактăр рулне тытса пырат, вăл пĕр кун хушшинче, вăтамран, 5,4 гектар сухалат.
М. Агейев фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Малтан акнă тĕштырăсем пурте лайăх шăтнă

ЙЕЛЧĔК. (Телефон тăрăх). Районри чылай колхозсем тĕштырăсене акса пĕтерчĕç. „Ким“ колхоз тулă—90 гектар, сĕлĕ—194 гектар; „Хĕрлĕ йалав“ колхоз, тулă 41 гектар, сĕлĕ 67 гектар; „Хĕрлĕ партизан“ колхозра тулă 75 гектар, сĕлĕ 88 гектар акса тĕштырăсем акмали плана пурнăçларĕç. „Хĕрлĕ партизан“ колхозра тĕштырăсене 100 процентченех йаровизацилесе çеййăлкăсемпе акнă.

„Ким“, „Хĕрлĕ йалав“, „Хĕрлĕ партизан“ колхозсен уйĕсенче малтан акнă тĕштырăсем хаљ пурте лайăх шăтса тухнă.

Майков.

Хăвăртрах тата лайăхрах акмала

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тăратнă сводкă тăрăх, майăн 1-мĕшне республикĕпе 56313 гектар çинче тĕштырăсем акса, плана 19 процент пурнăçланă. Йаровизациленĕ вăрлăхпа 18.634 гектар, çейăлкăпа 12,919 гектар акнă. Çурхи сухана 33.982 гектар, çĕртме тунă вырăнсенче 40384 гектар сухаланă, 15.617 гектар клевĕр, 22.789 гектар çинче кĕрхи калчасене сÿреленĕ, 11.871 гектар çинче апат панă.

Кăçал пирĕн республикă, иртнĕ çулхипе танаштарсан, çураки тăвассипе йулса пырат. Иртнĕ çулхипе ку вăхăтра тĕш тырăсене акассине 90,0 процент пурнăçланă пулнă. Кăçал пĕлтĕрхинчен начар ĕçлеме йурамаст. Кашни районăн, кашни МТС тата кашни колхозăн çурхи ĕççен планне хăвăртрах та лайăхрах пурнăçлассишĕн кĕрешсе пымала. Ĕçре социалисăмлă ăмăртăва анлăн сармала.

Йединоличниксем колхоза кĕреççĕ

* * Çĕнĕ Пинерти (Шăхасан р.) „Пинер“ колхоза çак иртнĕ кунсенче 3 йединоличник хуçалăхĕ кĕчĕç. Çапла „Пинер“ колхоз Май уйавне йалти пĕтĕм хресченсенчен 98 процентне пĕрлештернипе кĕтсе илчĕ.

Хаљ çĕç колхоза кĕнисем ытти колхозниксем пекех çуракинче ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç.

В. Лукин.

* * Уравăшри (Вăрнар р.) „Майăн пĕрремĕшĕ“ колхоз членĕсем Май уйавне государствă умĕнчи парăмсене: аш-какай, укçа-тенкĕ парассин иккĕмĕш квартăл планĕсене тултарнипе кĕтсе илчĕç. Çавăн пекех тата агитаципе пропаганда ĕçне тивĕçлипе туса пынă май, 5 йединоличник хуçалăхĕ колхоза кĕчĕç.

Й. Оçкин.

* * Кив Шулханти (Вăрмар р.) „Смычка“ колхозри комсомолĕцсем ĕçхресченĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне лайăх туса пыраççĕ. Вĕсемех колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентеççĕ. Тÿрĕ ĕçлекен йединоличниксем колхозра çеç вăйлă тырпул туса илме май пуррине тата колхозра çеç пуйан та культурлă пурăнма май пуррине лайăх ăнланса илчĕç. Çак кунсенче çĕнĕрен 3 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

М. Галкин.

* * Çĕнĕ Каçалти (Патăрйел р.) „Динамо“ колхоз Май уйавне йалти йединоличниксене пурне те колхоза йавăçтарнипе кĕтсе илчĕ. Апрел уйăхĕн малтанхи çуруйăхлăхĕнче колхоза 3 хуçалăх илнĕ.

И. Ваљушкин.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Колхозсем отчотсем тăратасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн апрелĕн 28-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче колхозсем отчотсем тăратасси çинчен постановлени йышăннă. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртса çирĕплетнĕ: ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе ССР Союзĕн Государствă План Комиççин халăх-хуçалăх учочĕн тĕп тытăмĕ 1937 çулта колхозсем ваљљи отчотсем тăратма туса çирĕплетнĕ формăсем ытлашши пысăк тата вĕсене ытлашши нумай графасем кĕртсе тултарнă, кунсăр пуçне колхозсен çулталăк хушшинче 31 тĕслĕ формăсемпе, хăшпĕр чухне тата 50 формăсемпе отчотсем тăратмала пулнă, вĕсене темиçе пин цифăрсемпе тултарма тивнĕ. Çав сведĕнисен ытларахăш пайĕ пачах кирлĕ мар пулнă, вĕсем колхозсем отчот тăратассине пăтраштарса йанă. Çакăн пирки вара колхозсене йĕртсе пырас çĕрте сийенлĕ пулса тăнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулта ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе ССР Союзĕн Государствă План Комиççин халăх-хуçалăх учочĕн тĕп тытăмĕ колхозсем ваљљи отчотсем тăратма тунă формăсене, вĕсем пачах тĕрĕс мар тесе шутласа, пăрахăçа кăлармала тунă. Колхозсем отчотсем тăратма 14 формă туса çирĕплетнĕ, вĕсенчен 11-шне пур колхозсем ваљљи те, тепĕр 3 формине çĕр мамăкĕ акакан тата йĕтĕн акакан районсем ваљљи тунă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пур организацисене те колхозсенчен çак постановленипе пăхман формăсемпе отчотсем тăратма ыйтма чарнă.

(ТАСС.)

Йапонин Вăтам Китай фронтĕнче 18.700 çын пĕтнĕ

ХАНЬКОУ, апрелĕн 27-ш. (ТАСС). Мартăн 25-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 15-мĕшне çитиччен Йапони çарĕн Вăтам Китай фронтĕнче вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, пурĕ 18.700 çын пĕтнĕ. Вĕлернисене 4. 200 çынна тата аманнисене 3.000 çынна Шанхайа илсе пынă. Çак вăхăт хушшинчех китайĕцсем Йапони аеродромĕсенче 42 самолйота йăлтах çĕмĕрсе пĕтернĕ, вĕсенчен 12-шĕ—гидроплансем.

Йапонĕцсем госпитальсем çине бомбăсем пăрахаççĕ

Майăн пĕрремĕшĕнче йапонĕцсем Нань—Йаньри (Хенань провинци) Лига наци тытăмĕнче тăракан госпиталь çине бомбăсем пăрахнă. Медикаментсем усракан чылай складсене аркатса пĕтернĕ. Складсенче ĕçлекенсенчен иккĕшĕ вилнĕ тата виççĕшне амантнă. Госпиталь вăрçă обйекчĕсенчен айакра ларат.

(ТАСС).

Пĕлтерни

Пайан, майăн 5-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре, Йалхуçалăх Институтĕнче пичет кунĕ йачĕпе парти, совет тата профсойуз активĕн, çтена хаçат редактăрĕсемпе редколлеги членĕсен, хаçат корреспонденчĕсен тата хаçат-журнал саракансен пухăвĕ пулат.

ПСК(б)П Хула Комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

„Промкоопстройăн“ Шупашкарти ертелне

Тăм çăракансем
Кирпĕч хĕртекенсем
Кирпĕч çапакансем
тата рабочисем

КИРЛĔ

Çак адрĕспе пымала: К. Маркс урамĕ, 15 № çурт. Правлени.

Академи театрĕнче

Майăн 5-мĕшĕнче

Вырăсла спектакль

Л. Н. ТОЛСТОЙ

АННА КАРЕНИНА

(5 пайлă)

Аслă режиççор
Г. В. СТРАНСКИЙ
лартат.
Художник
Й. Н. САПОЖНИКĂВ.

Талон № 183.
Абонемент № 8, талон № 17.

КОГИЗ-ăн
Шупашкарти бибколлектăрĕ

Кашни вунăкунлăхра çĕнĕ кĕнекесем килни çинчен обзор туса тăрат, тата çĕнĕрен тухакан литературă çинчен пĕлтерет.
Обзор кашни уйăхрах 5-мĕшĕнче, 15-мĕшĕнче тата 25-мĕшĕнче, кăнтăрла 12 сехетре, бибколлектăр çуртĕнче (Ленинградскайа урам, 5) пулат. Пур библиотекăрсене те обзор тунă çĕре пыма чĕнеççĕ.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ.

Шкул ачисем,
шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсем
тата пур граждăнсем!

КОГИЗ-ăн Шупашкарти, Патăрйеленчи, Çĕрпÿри, Йетĕрнери, Çĕмĕрлери, Куславккари, Сĕнтĕрвăрринчи, Канашри, Улатăрти магазинĕсем

кивĕ учебниксене сутăн илеççĕ.

Тыткаланă учебниксене (вырăсла йе чăвашла чĕлхепе кăларнисене) магазина сутăр. Сутмали-илмели условисем КОГИЗ магазинĕсенче пур.

КОГИЗ-ăн
Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ.

2—1

ЧĂВАШ АССР
Çутĕç Халăх Комиссариачĕ

Çĕрпÿри педучилищă çумĕнче пуçламĕш шкулсен учителĕсене хатĕрлемели 3 уйăхлăх курс организацилет.

Курса вăтам шкултан вĕренсе тухнисене тата ытти шкулсенче вĕреннисене те йышăнаççĕ.
Зайавленисене кăçалхи майăн 10-мĕшĕччен Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариатне памала. Пĕрле çак документсем кирлĕ: а) вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат; б) миçе çулхине кăтартакан справкă; в) сывлăх пирки справкă.

Курсантсене уйăха 150 тенкĕ стипенди параççĕ.
Занятисем майăн 15-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ.

Чăвашстройтреста

рабочисем, работницăсем, штукатурсем, каменщиксем

КИРЛĔ

Рабочисем валли хватер пур.

2—1

Чăвашполиграфтрестăн
1-мĕш № типографине

Йалан ĕçлеме шут ĕçне пĕлекен работниксем кирлĕ.

Расчот пайĕн бухгалтĕрĕ,
аслă бухгалтĕр заместителĕ
тата счетовод

Ĕçукçи государствă нормированийĕ тăрăх.

Адрĕс: Шупашкар хули, Пичет çуртĕ.

„Заготлен“ Чăваш республикĕнчи кантурне

Бухгалтĕр-ревизор
оперативлă учотра ĕçлеме
економист тата
агроном-семеновод

КИРЛĔ

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Ленин урамĕ, 30.

Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕн Правленийĕ Нестĕр Кириллăвич Йанкас писателĕн йуратнă пиччĕшĕпе йăмăкĕ:

Митрофан Кириллăвич Йефимăвпа
Йелизавета Кириллăвнă Йефимăвă

вăхăтсăр вилни çинчен пĕлтерсе, Йанкас йулташпа пĕрле хуйхăрат.

Мĕн пулса иртет Голландире

(Амстердамран килнĕ çыру)

Голланди çине тата унăн правителствин политики çине Германи те, Англи те питĕ хытăн çавăрăнса пăхаççĕ. Германи фашисăмĕнĕн Голланди пит пысăк вырăн йышăнса тăрат. Франци тĕлĕшпе тытса пыракан реваншăн стратегилĕ планĕсене пурнăçлас йенчен Голланди территорийĕ, Бельги территорийĕ пекех, Германи çарĕсене Францине куçарма аван май пулса тăрат, тесе шутлаççĕ Германири хăшпĕр çар çыннисем. Тепĕр йенчен, Германи фашисăмĕ Голландийе хăйĕн шухăшĕсене парăнтарас пулсан, Англи тĕлĕшпе хăрушлăх тума унăн территорийĕ питĕ кирлĕ тĕреклĕ базă пулса тăрĕччĕ. Голланди территорийĕ çинче Германи çарĕсем тата тинĕс базисем пулни, специалиссем калашле, Германи Англи карланкин умне пистолет тăрăтни пекех пулĕччĕ.

Англи политикинче те Голланди палăрмалах вырăн йышăнат. Лăпкă океан çинче пыракан Англипе Йапони хушшинчи хирĕçÿсенче Голланди хăйĕн колонийĕсемпе питĕ кирлĕ вырăн йышăнса тăрат. Йапони империалисăмĕн Лăпкă океан кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи Голландипе Англи владенийĕсене тытса илес планĕ çителĕклĕ палăрса тăрат. Йапони империалисăмĕн Голланди колонийĕсенчи (Индонезири т. ыт.) економикăлă експансийĕ питĕ анлăн сарăлса кайнă, çавăнпа та çак колонисенче Англи хуçа пулса тăрассине хĕтсе кăларас чăн-чăн хăрушлăх тухса тăнă. Нумайах пулмаст, Голландин Англири посланникĕ Свиндерин, „Королевский имперский обществăн“ ларăвĕнче Лондонра тунă хăйĕн докладĕнче, Йава тата Суматра утравсем çинче Англин пысăк интересем пур тесе пĕлтернĕ. Çак утравсем çинче Англи 100 мĕлйун кĕрепенке стерлинг капитал хывнă. Кунсăр пуçне, Азин çав лайĕнчи Голланди владенийĕсем, Англин Сингапурпа Австрали, çаплах Индипе Гонконг хушшинчи коммуникацийĕсене (çул-йĕрĕсене) тытса тăрас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, Голланди правителствин политикăлă çул-йĕрне, ăна хăйĕн влийанинче тытса тăма тăрăшса, Англи йаланах пысăк хака хунă.

Голланди правителствине, тĕпрен илсен, виçĕ партирен,—католиксен, кальвинистсен тата историлĕ-христиансен партийĕсенчен тунă. Правителствăра Колийн (кальвинист) пуç пулса тăрат. Правителствăна кĕмен консервативлă-либерăллă парти, тата иреклĕ-демократилĕ союз, социал-демократилĕ парти пекех, правителствăна хăйсен представителĕсене кĕртсе, ăна анлăрах никĕс çинче реорганизацилеме тăрăшаççĕ.

Хальхи правителствăн политики çак фактăсемпе те лайăх палăрса тăрат. Пĕрремĕшĕнчен, Голланди правителстви Итали Абиссинийе тытса илнине, малтан йышăнакан государствăсемпе пĕрле йышăнма васкарĕ. Голланди посланникĕ Римра „Итали королĕнпе тата Абиссини императăрне“ хăйĕн ĕнентерÿ грамăтисене панă. Иккĕмĕшĕнчен, нумайах пулмаст Германи фашисăмĕ Австрийе тытса илнĕ май, Голланди правителстви хушу панă, вăл хушу тăрăх Голландийа кĕме Австри тата нимĕç емигранĕсене, хăйсен çĕршывне чим чăрмавсăр кайаллă таврăнма пултарнине ĕнентерме пултаракансене çеç ирĕк панă. Ку хушу ĕнтĕ пуринчен малтан фашисăма хирĕçле Австри тата нимĕç политемигранчĕсене хирĕç пырат, мĕншĕн тесен, политикăлă емигрантсем хăйсен çĕршывне ирĕклĕн таврăнма“ пултарнине нийепле те ĕнентерме пултарайманни хăйне ăссĕнех паллă. Çав вăхăтрах Германи шпионĕсем тата гестапо агĕнчĕсем (Германин вăрттăн полици агĕнчĕсем) нимĕн чăрмавсăрах Голландийе нумай хисеплĕн пырса çÿреççĕ. Виççĕмĕшĕнчен, Голланди правителстви Испани тĕлĕшпе хăйĕн ĕçĕсене пĕтĕмпех Англи правителстви йевĕрлĕ туса пырат. Правителствă пресси (хаçат-журналсем) коммуниcла партийе хирĕç кампани туса пырат. Голландири коммуниcла парти республикăлă Испанин саккунлă правителствине хĕçпăшалсем сутăн илме йаланхи йĕркесем тăрăх права парас сĕнÿ кăларнă. Коммуниcла партине хирĕçле кампанийе пĕр вăхăтра социал-демократилĕ пресса та хутшăннă. Пулăшки вăхăтра тин, айалтан массăсем хĕснипе, Голландири социал-демократилĕ парти вăл ыйтупа хăйĕн политикине пĕртак улăштарнă.

Голланди правителстви пĕтĕмĕшпех Чемберленпа Англи реакцийĕн йĕрĕ тăрăх пырат, тесе калама пулат.

Сывхарса килекен пĕтĕм тĕнчери економикăлă кризиса май, Голландин економикăлă лару-тăрăвĕ ытларах та ытларах йапăхланса пырат. Голланди хăйĕн таварĕсене йут çĕршывсене сутассине тĕнчери рынакра ытти çĕршывсен конкуренцийĕ чăрмантарат. Ĕçсĕр йулнисен хисепĕ, 1932 çулпа, пĕтĕм тĕнчери економикăлă кризис чи çивĕчленсе çитнĕ вăхăтпа, танлаштарсан, нимĕн чухлĕ те чакман. Хальхи вăхăтра Голландире ĕçсĕррисен хисепĕ 500 пин çын, вăл пĕтĕм çĕршывăн рабочи клас хисепĕнчен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ пулат.

Çак условисенче Голландири демократилĕ пичет, çаплах тата тĕрлĕ партисем те, правителствăна унăн политики тĕлĕшĕнчен çирĕп позици тытса ыйтаççĕ. Вĕсен позицине хăшпĕр сăнаса пыракансем „руль сĕр“ политикă тесе калаççĕ. Хăшпĕр ытларах реакцилĕ хаçатсем („Нейе роттердамер курант“) Францири халăх фрончĕн правителствине хирĕç тата республикăлă Испанийе хирĕç уççăнах çыраççĕ. „Телеграф“ хаçат уççăнах фашисла агрессорсене хÿтлес çул тытса пырат тата Голланди правителствине „Виççĕмĕш империпе“ сывхарма чĕнет. Вăл хаçат Чемберлен политики майлă, Германийе тата фашисла Италийе кÿртсе, Хĕвеланăç-Йевропăри государствăсен блокĕ тăвассипе ырлат. Социал-демократилĕ парти Голландире халăх фрончĕ тăвассине хирĕç пырат. Испанири вăрçă тата „хутшăнмалла мар политикă“ ыйтăвĕсемпе Голландири коммуниcла партийе хирĕç пырат.

Çакăн пек лару-тăрупа пуринчен малтан Германи фашисăмĕ усă курат, вăл кунта хăйĕн агентурине туса хунă. Гитлĕрла агентурăна Голландире национал-социалисла парти тесе йат панă, ăна инженер Муссерт текенскер йĕртсе пырат. Çак фашиса агентурă Голландире хăйĕн пĕтĕм ĕçне Чехословакири, Скандинавири тата ытти çĕршывсенчи агентурăсен паллă тĕслĕхĕсемпе туса пырат. Муссерт та Голландире Зейсс-Инкварт Австрире выљанă вăййах выљасшăн. Германи фашисăмĕн пуçлăхĕсемпе чи тачă çыхăну тытакан Муссерт нумайах пулмаст Берлина кайнă, унта вăл темле пĕр „питĕ кирлĕ канашлура“ пулнă. Вăл унтан таврăнсанах национал-социалисла парти Голланди правителствин тулашри политикине улăштарма ыйту тăратнă. Фашисăм „Голланди правителствин тулашри политикине кÿршĕри Германи политикипе пĕр пек тума“ хушат.

Фашисла хаçат „Фольк унд фатерланд“ правителствăна, Австрири Шушниг правителствин кун-çулне уççăнах асăнтарса, хăратма пуçланă.

Голландири гитлĕрла агентурă ĕçĕсене хирĕç тăтăклăн тата вĕçне çитиех тăракан пĕртен пĕр вăй вăл — коммуниcла парти тата ăна пулăшса пыракан Голланди рабочийĕсем.

Уполномоченный Чувашглавлита № 224.
Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ д 408.